КАПКӐН №1

Йанвар. 1936 ҫул.
Уйрӑм №-хакӗ 25 пус.

1905—7 ҫулсенче
Урампа пыракансем:—ухмаххинчен ҫитнӗ ӗнтӗ, тӑр ухмахах вара.
Городовой:—есӗр патшана мӗншӗн ухмах тетӗр, а?!
Урампа пыракансем:—епӗр патша ҫинчен асине те илмен.
Городовой:—А,-а-а, пӗлетпӗр епӗр Раҫҫейре кам ухмаххине!..

„Чаплӑ йубилей“

(Пулса иртнине аса илни)

— Ну, чунтан-вартан йуратнӑ мӑшӑрӑм, савӑн. Ҫак кунсенче манӑн чаплӑ йатӑм пӗтӗм тӗнчене сарӑлӗ, есӗ те ырантан вара пур хӗрарӑмсенчен те мухтавли пулӑн,—тенӗ Виктӑр Ваҫилийӗвич Тӳмерӑв пӗр ирхине, вырӑнӗ ҫинчен тӑрсанах арӑмне.

Хӑппӑл-хаппӑл тумланнӑ та, хӑй ӗҫлекен Госстрах кантурне тухса вӗҫтернӗ. Васкамала, ӗҫ нумай. Ыран унӑн йубилейӗ пулмала. Финанс пайӗ ҫумӗнчи II номӗрлӗ йачейкӑ вӑл „револуцилӗ ӗҫе“ тытӑнни 20 ҫул тултарнине асӑнса уйавлаҭ. Ыранхи кун йӗркине хатӗрлемеле, „репетици“ тумала.

Вӑл кантура пырса ҫитнӗ ҫӗре кунта йачейкӑ бӳровӗн членӗсем тата йачейкӑри паллӑраххисем пуҫтарӑннӑ та. Тытӑннӑ „чаплӑ уйав“ программине тума.

— Есӗ, Скворцов йулташ, чаплӑ лару уҫӑлсан, ҫак хут тӑрӑх манӑн автобиографипе манӑн „револуцилӗ ӗҫсем“ ҫинчен каласа парӑн,—тенӗ Тӳмерӑв хӑйӗн сотрудникне, сакӑр листа хут ҫине машинкӑпа ҫапнӑ автобиографине портфӗлӗнчен кӑларса тыттарса.

— Есӗ, К...цов й-ш, „Канаш“ редактӑрӗ Микулай Золотӑвпа аван пурӑнатӑн. Акӑ сана автобиографин тепӗр екземпларне. Халех ҫитер ӑна редакцине. „Канашӑн“ ыранхи номӗрне йепле те пулсан кӗртме тӑрӑш,—тенӗ тепӗр йулташа.

Автобиографин виҫҫӗмӗш екземпларне „йубилар“ хӑйне хӑварнӑ. Ӑна вӑл хӑйӗн „личное дело“ тенӗ хутсем ҫумне ҫӗлесе хума хатӗрленӗ.

— Есӗ, Федорӑв йулташ, хуҫалӑх ӗҫӗсене лайӑх ӑнтаратӑн, савӑнпа та сана веччӗр валли ӗҫме-ҫиме хатӗрлеме тивет,—тенӗ Тӳмерӑв виҫҫӗмӗш йулташа.

Кашнинех тивӗҫлӗ „нагрузкӑ“ лекнӗ. Савандейӗва „урра“ кӑшкӑрма тапратса йама, Котелникӑва ташӑ пуҫласа йама, т. ыт. те.

Унтан тытӑннӑ резолуци пройектне тишкӗрме. Пысӑк резолуци, историлӗ резолуци хатӗрленӗ иккен „йубилар“.

— Кунта ҫитменлӗхсем пур. Ман шухӑшпа Шупашкар хулине „Тӳмерӑв хули“ тесе йат пама ыйту лартмала,—тенӗ пӗр подхалимӗ.

— Ман шухӑшпа, Виктӑр Ваҫилийӗвич чӗрӗ чухнех, ӑна памӗтник лартма йышӑнас пулаҭ,—тенӗ тепӗри.

„Ват револуционер“ ку сӗнӳсемпе килӗшмен, вӑл нумайа хапсӑнакан ҫын мар.

— Шупашкар йачӗ халлӗхе ҫаплах йултӑр, хамӑр Кӗчкей вулӑсне ман хушамата пама йышӑнни те ҫитӗ; памӗтник лартассине те халех тапратас мар, мӗншӗн тесен мана истори манас ҫук, кирлӗ вӑхӑтра памӗтникне лартӗҫех,—тенӗ вӑл лешсене хирӗҫ.

Урӑх сӗнӳ пулман, резолуцийе пӗр сасӑпах йышӑннӑ, вара кашни хӑйне хушнӑ ӗҫе тума саланнӑ.

„Ватӑ револуционерӑн“ автобиографийӗ те редакцине пырса ҫитнӗ.

— Ой, батушки. Ку мӗнле тамаша пулаҭ-ха тата?—тенӗ Н. Золотӑв сакӑр листа ҫине ҫапӑннине вуласа тухсан.

— Кунта тӗнчере пулман йапала курӑнаҭ-ҫке. Тӳмерӑв миҫе ҫул тӗрмере ларнине шутласа пӑхсан, вӑл хӑй ҫураличченех пилӗк ҫул малтан тӗрмене лекни курӑнаҭ кунтан,—тенӗ те, сирпӗтнӗ „йубилар“ автобиографине сӗтел ҫинчен.

Тепӗр кунче, заңати пӗтнӗ хыҫҫӑнах, апат таврашӗ ҫимесӗрех, 11 номӗрлӗ йачейкӑри коммуниссем тата ҫав йачейкӑ пӗрлештерсе тӑракан учрежденисенчи сотрудниксем хӑйсен арӑмӗсемпе чаплӑ ларӑва кайма хатӗрленме тытӑннӑ. Камӑн улӑштармали кӗпе-йӗм пуррисем кӗпе-йӗмсене улӑштарса тӑхӑннӑ, праҫниксенче тӑхӑнакан тумтирӗсене тӑхӑннӑ, сухаллисем сухалӗсене хыртарнӑ, вӑрӑмрах ҫӳҫлисем тикӗслетнӗ. Хӗрарӑмсем тата капӑртарах хатӗрленнӗ. Вӗсем, капӑр тумланнинчен пуҫне, хӑшӗ пӗри пичӗсене штукатурланӑ, куҫ харшисене спичкӑ пуҫӗ ҫунтарса хуратнӑ, чӗрнисене сӑрланӑ, чӑлхисене ҫӗнӗ резинкӑсемпе кӑшӑлланӑ (унсӑрӑн ташланӑ чухне чӑлха кунчисем анса ларма пултараҫҫӗ), сараллнӑ шӑллисем шӑлӗсене наштак порошокӗпе тасатнӑ, т. ыт те.

Ҫапла хатӗрленнӗ халӑх кӑтартнӑ вӑхӑтра пӗр ҫын пек Госстрах кантурне пуҫтарӑннӑ. Унта хӗрлӗ мӑйҫыххи (галстӑк) ҫакнӑ „йубилар“ малтанах ҫитсе ларнӑ.

— Чаплӑ ларӑва уҫатӑп,—тенӗ вӑл сӗтел хушшинчен ура ҫине тӑрса.

Унтан Скворцов доклад тума тытӑннӑ. Сехет ҫурӑ вуланӑ „йубиларӑн“ пурнӑҫӗпе „револуцилӗ ӗҫӗсем“ ҫинчен.

— Сывӑ пултӑр чӑваш ҫӑлтӑрӗ Тӳмерӑв!—тесе пӗтерне вӑл хӑй докладне. Ҫавӑнтах Савандейӗв:—урра-а-а!—тесе кӑшкӑрса йанӑ та Тӳмерӑва ыталаса илсе ҫӳлеле сиктерме тытӑннӑ. Ӑна пулӑшма вун-вуникӗ ҫын чупса пынӑ.

Вӗлт те вӗлт тӑваҭ „йубилар“ мачанала, йӑлтӑр та йӑлтӑр тӑваҫҫӗ електричӗствӑ ҫутипе унӑн пуҫӗнчи ҫӳҫҫӗр вырӑнсем.

— Ех, шеремет! Нумай ӗҫленипе мӗскӗнӗн пуҫӗнчи ҫӳҫӗсем те тӑкӑннӑ-ҫке,—тесе ӗсӗклесе макӑрса йанӑ кӑмака хыҫӗнче тӑракан уборщицӑ.

— Урра-а-а! Урр-а-а-а!.. кӑшкӑрнӑ уйава пуҫӑннӑ халӑх.

— Сывӑ пултӑр Тӳмерӑв! Сывӑ пултӑр ватӑ... тенӗ сасӑ пӗтӗм пӳрте кисрентернӗ.

Шӑпӑр-шӑпӑр йухнӑ „йубилар“ куҫӗсенчен савӑнӑҫлӑ куҫҫулӗ.

Унтан пуҫланса кайнӑ ӗҫкӗ-ҫикӗ, вӑйӑ, ташӑ, йурӑ, пӗрне-пӗри чуптуни.

Хӑшӗ пӗри килтенех ҫуттипе „хӗҫпӑшалланса“ пынисем, „йубилара“ хисеплесе „Вы жертвою пали“ тенӗ йурра шӑрантарнӑ.

Пӗр сӑмахран, ӗлӗк „содом“тени тапранса кайнӑ. Кам мӗнле манерпе килне таврӑннине каласа пама пултараймастӑп. Анчах ҫынсем хушшинче ҫакӑн пек хыпар пулчӗ: хӑшӗ киле таврӑнас вырӑнне кӳршӗ хӳми ҫине утланса ларса, хапха йупине ыталаса илсе ҫывӑрса кайнӑ иккен; хӑшӗ-пӗри телефон йупине, хӑй арӑмӗ тесе, ҫӗрӗпе киле леле сӗтернӗ иккен, т. ыт. те.

Ҫапла „чаплӑ“ иртнӗ 1925 ҫулти йанварте Тӳмер Виктӑрӗн „уйавӗ“

С-к.

Ӑслӑ директӑр

Сӗрпелӗнчи кӗҫӗн-вӑтам шкулӑн директӑрӗ (Вӑрнар р.) Краснов й. шкул пахчинчи панулмисене таҫта салатса пӗтерчӗ. Ачасене пӗр улма та хӑварса памарӗ.

Ҫӗрпелсем.

В. Макаров художник ӳкерчӗкӗ.



Вӗренекенсем:—Панулми ҫийес килет те, пӗрер улма та пулин памӑрши, директӑр йулташ?

Директӑр:—Вӑн унта, йӑвӑҫҫи ҫинче, пӗр улма ҫакӑнса тӑрат̆. Сире ваԓԓи хӑварнӑ, кайса ҫийӗр, мӗн манран ыйтмали пур...

Куԓтурӑ шыраса.

— Куԓтурӑ кам сутат̆? Илтмени есӗ никамран та?—ыйтат̆, Катӑк сӑмса Чакӑр куҫран.

— Мӗн тӑватӑн есӗ куԓтурӑпа?—пӗлесшӗн васкат̆ Чакӑр куҫ Поканкин йалӗнче.

— Сӑмсана тӳрлетме кирлӗ, — тавӑрат̆ Катӑк сӑмса.

— Ӑҫта ҫӗмӗртӗн сӑмсуна?

— Нойабӗрӗн 30-мӗшӗнче, лайӑх уҫӑ кун, хавассӑм вӑйлӑ хӑпарнӑ вӑхӑтра, куԓтурӑ шырама тухса утрӑм. Хам пуҫра Поканкӑра сӗт-ҫу фермине кайас шухӑш пусса илнӗ. Ну-и карӑм. Фермӑна ҫитсе кӗтӗм. Унтан сӗт-ҫу тирпейленӗ комнӑта кӗрсе тӑтӑм. Пӳрте кӗрсенех, алӑк патне тӑкнӑ шывран шуса ӳкрӗм. Унтан хӑвӑртрах сиксе тӑтӑм та, пӑруран тӑкӑнса ҫӗртре выртакан пӑрҫалӑ йӑтӑ ҫине ҫитсе пусрӑм. Йӑтӑ тарӑхнипе шӑлне йӗрсе йанинчен хӑраса, тарма тӑнӑ хушӑра, пӑру навусӗ ҫинчен шуса кайса, сӗтел кӗтессине пырса ҫапӑнтӑм. Тӑтӑм та пӑхатӑп. Сӗтел хушшине уриаллипе кӗрсе выртнӑ, тусан ҫинче тапӑртатса выртат̆ куԓтурӑ. Аха, тупрӑм куԓтурӑ, тесе шутлатӑп, унпа пӗрле тапӑртатса. Анчах, ун уринчен комнӑтӑна тусан вӗҫтернисӗр пуҫсӑр нимӗн те тухманнине сиссе, тухса утрӑм малала хӗрлӗ сӑмсана пӑчӑртаса тытса.

Акӑ урам хушшипе талкӑштарса пыратӑп куԓтурӑ шыраса. Йалсовет канцеԓарине ҫитсе кӗтӗм. Пӳлӗмсем нумай.

— Кунта ҫӗтсе кайас марчӗ?—хамран хам шикленсе утатӑп шалала.

Кунта куԓтурӑ туллийех пулӗ, тетӗп. Анчах кантӑк занавесиксем тусан айне пулнине курах кайрӑм. Ех, куԓтурӑ!—терӗм. Ытти кабинетсене кӗмерӗм. Мӗншӗн тесен, кӑмрӑк укҫи патне килнӗ старик те, кабинетсем хушшинче колхоз каҫҫирне икӗ кун та пӗр каҫ шырарӗ.

Киле куԓтурӑ тупаймасӑрах таврӑнтӑм. Йермошкӑ йалсоветӗнче куԓтурӑлӑ учрежденисем тупасси никамшӗн та паллӑ мар.

М.Иванов—Пуксай.

МИШКĂПА АРКАШКĂ

Питĕ те килĕштереççĕ пĕр-пĕрне Мишкăпа Аркашкă. Уйрăлмаççĕ вĕсем пĕр-перинчен. Ĕçеççĕ пĕрлешсе. Вăрçасса та вăрçаççĕ пĕрлешсех. Уйăрма çук вĕсене пĕрне пĕринчен.

— Венчет тунă пуљ сире Аркади Петровчăпа?— тет вара Мишкă арăмĕ, Аннă Ивановнă, йаланах пĕрле ĕçнине сивлесе.

— Михал Йакăлчă пĕтерет сана. Ĕçкĕпех пĕтетĕр иксĕр те. Вăл хăй те ĕççĕр тăрса йулчĕ те, сана та ĕççĕр тăратса хăварасшăн йурийех ĕçтерсе çўрет. Ăна та сисместĕн есĕ,—тесе вăрçат йаланах Аркашкă арăмĕ, Клавди Константиновнă, Аркашкă ўсĕр таврăнсан.

Те йури ĕçтерет, те ахаљ—пĕлместпĕр. Анчах пĕррехине çапла каласа хучĕ Мишкă хĕрĕнкĕпе:

„Хăйне шутсăр йурататăп Аркашкăна. Анчах арăмне йуратмастăп. Пуйан çын хĕрĕ. Мăн кăмăллă. Сторов тусан та сторов тумаст Аркашки ĕçе вырнаçсан. Ана сторов тугарасшăнах вара ман Аркашкине ĕçрен кăларасшăн вĕтеленсе çўреме лекет. Хам ĕçлеменскер, йаланах укçа пулмаст. Укçа çынран кивçен илсе ĕçтерсе ўсĕртсе прогул тутарма лекет вара мана, мĕскĕне. Пĕррехине епĕ те, Аркашкă та ĕççĕр тăрса йултăмăр. „А, а-а, здравствуйте, Михал Йакăлчă!" тесе урам урлă сторов туса иртсе кайрĕ. Упăшки ĕçлеме пăрахсан акă йепле лайăхланса кайат мĕн ку арăм, терĕм. Тепĕр виç-тăватă кунтан, пĕлетĕп—Аркашкă ĕçлеме кĕнĕ. Лăпах станцă урамĕнче куратăп Аркашкă арăмне. Куратăп та сторов тăватăп. Нимĕн те чĕнмерĕ. Ах питкуç пĕçерсе кайрĕ. Ниăçта кайса кĕрейместĕп. Тăхта-ха, терĕм. Вĕрентĕп, вĕрентĕпех епĕ сана сторов тума, терĕм. Анчах кĕсйере пĕр пус укçа та çук.

— Пушалстă, пĕр çирĕм тенкĕ пар, Çтепан Васçилчă. Сысна çурисем питĕ лайăххисем пур пасарта,—тетĕп аптекăна кĕрсе.

Аркашкă вăрманпромхозра бухгалтĕрте ĕçлет. Кăнтăрла апат çиме обйазательнă киле таврăнат. Çур литăр кăсйене чикрĕм те, Аркашкă апата тухасса кĕтсе тăратăп.

— Здоровă, Аркашкă. Мĕнле пурăнатăн? Чылайранпа ĕçлетĕн-и кунта?—йапататăп Аркашкăна.

— Ернене йахăн ĕçлетĕп. Уйăхне виçĕ çĕр тенкĕ. Аван. Çак ернере ĕçмен те хаљ. Пăрахас тетĕп, Мишă,—мăн кăмăллăн калаçат Аркашкă.

— Ай, ан калаçкаласа тăр-ха, Аркашкă,—тетĕп.

— Чăн калатăп,—тет Аркашкă.

— Есĕ мана чукмарпа пуçран хунă пекех çапса хуçрăн. Есĕ ĕçлеме кĕнĕшĕн йури хĕпĕртесе çур литăр чиксе килтĕм. Икĕ сехете йахăн кĕтсе тăратăп. Акă: перем те çĕмĕрем, хам таçта вăрмана тухса кайам. Сыв пул!—вăрман йенеле утма тытăнатăп. „Чăтаймăн ĕçмесĕр"—тетĕп ăшăмра.

— Ан аппалан, Мишă. Кай та ĕç килне ман йатпа,—çемçен пуçларĕ Аркашкă.

— Сансăр пултараймастăп,—тетĕп.

— Пăрах, ан ухмахлан,—тет Аркашкă.

— Неушелĕ пĕр çăвар та сыпмастăн, Аркашкă?— йаваш куççемпе тархасласа пăхнă пек пăхатăп Аркашкă куçĕсенчен.

— Сана хĕрхенсех ĕçмеле, Мишă. Йурĕ—ĕçĕп. Анчах хаљ пултараймастăп: апат çиме киле кайатăп,—тет Аркашкă, çемçелнĕ пек пулса.

— Как раз апат анмалăх кăна. Айта столовăйне кĕрсе тухатпăр,—утрăм çав вăхăтрах столовăй йеннеле. Аркашкă утрĕ ман хыçран, чăтаймарĕ.

— Васкарах майлаштарас. Атту заңатине ĕлкĕрейместĕп,—тет Аркашкă...

— Ничево. Ĕлкĕретĕн,—тетĕп.

Пĕр стакан тулли тултарса патăм. „Çавăрса хур"—тетĕп. Çавăрса хурчĕ Аркашкă. Хыпаланса пĕр пĕчĕк хăйар тыттартăм.

— Киле кайас пуљ. Атту ĕлкĕрейместĕп,—тет Аркашкă.

— Мĕн киле каймали пур? Тавай котлет илетпĕр. Вăт сана кăнтăрлахи апат çитрĕ те. Урăх мĕн кирлĕ. Тавай,—тетĕп. Аркашкă килĕшрĕ.

— Çавăрса хур!—тетĕп тепре тултарса парса.

— Ўсĕрлетĕп вĕт, Мишă,—тет Аркашкă стакана тытмасăр.

— Васкарах. Çынсем сисеççĕ. Хăвăрт,—васкаса, хаçат хўтипе тыттаратăп.

Аркашкă иккĕмĕш стаканне те тĕпне пĕр тумлам йулмиччченех çавăрса хучĕ. Котлетсем çийетпĕр.

— Ерехпе шăршă кĕме пултарат. Пĕрер курка сăра ĕçес пуљ. Сăра кăна ĕçнĕ, тетчĕр,—тетĕп те, васкаса тăватă бутылкă сăра илсе пырса лартатăп.

Çур литровкăн йулашкине сăра çине йарса пэтăм Аркашкăна, хăй сисиччен.

Икĕ сехет лартăмăр. Аркашкă кĕселленсе çитрĕ. Ури çине те тăраймаст. Аран калаçат.

— Киле ăсат, Мишкă,—тет.

— Киле ан кай, Аркашкă. Заңатинех кай. Хаљ есĕ ўсĕр мар вĕт. Ĕçлеме пултаратăн. Ылтăн вĕт, есĕ Аркашкă. Ху йатна ан çĕрт. Заңатинех кай. Прогул тăват тейĕç. Айта хам çавăртса леçем,—тетĕп.

Аран-аран çавăртса илсе çитертĕм.

— Чăпер кĕр,—тесе алăк уçса кĕртсе хăвэртăм. Катанарах кайса пăхса тăратăп. Лайăх пĕлетĕп епĕ унăн ўсĕрне. Ех, унчен те пулмарĕ: чанкăр, чанкăррр!—ванма тапратрĕç чўречесем, кантăксем. Вĕлт! вĕлт!—тухса тараççĕ чўрече витĕр пукансем. Çынсем чупа-чупа тухаççĕ вăрманпромхоз канцељаринчен.

Йулашкинчен тухрĕ Аркашкă та. Елхери пек, хырăма каçăртса тăрат. Утаймаст. Лап!—çаврăнса анчĕ. Урăх тăмарĕ вырăнтан.

— Хамăн миççине пĕтертĕм,—терĕм те, утрăм, епĕ те малала.

— Здравствуйте, Клавди Константиновнă!—тетĕп тата икĕ кунтан Аркашкă арăмне урамра курса.

— Здавствуйте, здравствуйте, Михал Йакăлчă, здравствуйте!—тет пĕтĕмпе çемçелсе кайса.

„Охă, йусарăм иккен сана"—тетĕп хам ăшăмра.

— Аркадий Петрович мĕнле пурăнкалат?—тетĕп.

— Шĕкĕр. Питĕ те лайăх. Ĕçме пăрахрĕ. Хаљ тăрăшсах ĕçлет,—тет.

„Пĕлетпĕр мĕнле пурăннине"—тетĕп хам ăшăмра. Виççĕмĕш кун вĕт-ха ăна ĕçрен кăларса йани. Ăна ĕçрен кăларса йани хĕпĕртеттермест мана. Ăна ĕçрен кăларни хăйне мĕнле хуйхăртарат, мана та çавах хуйхăртарат. Анчах вăл ĕçлеме кĕрсенех арăмĕ сторов тума та, калаçма та пăрахни тарăхтарат мана.

Çавăнпа кивçен укçа илсе ĕçтерсех кăлармалекет Аркашкăна вырăнтан.

Аркашкăна та, унăн арăмне те чылайччен курăнмасăр пурăнтăм. Йури тарса çӳремен. Ахаљ курăнмала пулмарĕ вăл хушăра. Пĕр икĕ ерне иртрĕ пуљ курăнăçманни.

Пĕрре, ирхине, станцăнала пыратăп. Аркашкă арăмĕ пасар йенчен пыраť. Шăпах хирĕç пултăмăр.

— Здравствуйте, Клавди Константиновнă!—пуçа тайса, ăшă кăмăллăн сторов турăм Аркашкă арăмне. Нимĕн те чĕнмерĕ. Ой, намăс. Ăста хурас намăса? Пăхса тăракансем чăтаймарĕç—кулса йачĕç. Пит пĕçерсе кайрĕ пĕтĕмпе. „Неушелĕ Аркашкă еçлеме кĕнĕ?“-шухăша кайрăм станцăнала утнă май.

— А-а-а-а, здоровă, Мишă!—катаран аллине кăнтарнă, мана хирĕç пĕтĕм савăнса пыраť станцă йенчен Аркашкă.

— Здоровă, здоровă! Мĕнле пурăнатăн? Ĕçсем мĕнле? Халь те вăрманпромхозрах-и?—тетĕп, унтан кăларса йани пĕр-икĕ ерне иртнине лайăх пĕлетĕп пулин те.

— Унтан куçрăм Мишă. Çӳреме инçерех терĕм. Шалу та сахалтарахчĕ. Инвалидсен ертелне кĕтĕм. Кунта шалу та чылайрах тивет. Рехмет. Шĕкĕр,—савăнаť Аркашкă.

— Айта, ирхине пыршăтăксене чӳхемеле кĕрсе тухар пивнойа,—тетĕп.

— Тăхăр сехет çитет. Заљатине каймала. Ĕçсен лайăх мар. Тĕп пултăр халь, Мишă. Кайран хăçан та пулин,—турткалашаť Аркашкă.

— Чĕрĕкне илес пуљ. Атту сăри кăмсăкланнă,—тетĕп.

Тытăнтăмăр. Чĕрĕк вырăнне çур литăр илтĕм. Васкаса ĕçетпĕр. Вăхăт 10 сехете çывхараť. Пирĕн иккĕмĕш çур литăр пушанаť. Сăри вăл—хăй тĕллĕн.

Аркашкă прогул тăвасшăн: киле кайса çыврасшăн.

— Ылтăн вĕт, есĕ, Аркашкă—тетĕп. Прогул туса ху йатна ху ан çĕрт. Заљатинех кай,—тетĕп. Çавăртса леçсе йатăм. Аран-аран сулланса кĕчĕ канцељарине. Сĕлехисем йухаççĕ—нимĕн латти çук. Ну, кăтартĕ вăл латтине. Унччен те пулмарĕ—кантăксем чанкăртатма тытăнчĕç учрежденире. Пукансем вĕçсе тухаççĕ чӳречерен урамала. Çыннисем чупса тухаççĕ. Аркашкă аркатаť.

Аркашкăна кăларчĕç ĕçрен çав кунах. Ӳсĕрсене урăлтармали çĕре кайса хупрĕç. Аркашкă—ĕçсĕр. Епĕ те ĕçсĕр. Анчах вăл каллех ĕçе кĕме пултараť. Мĕншĕн тесен, пĕр ĕçме пăрахсан—икĕ кун ĕçмесĕр пурăнма пултараť. Çав вăхăтра вара ĕçе те кĕрсе вырнаçаť,—терĕ Мишă кайала сулăнса.

Ç. Ш.

Телейлĕ сысна.

Кăшар кассинчи (Çĕрпӳ р.) вулав çурчĕ питĕ йапăхса кайнă. Вулав çуртне сыснасем кĕрсе выртнă.

— Ма есĕ пайан киле час таврăнаймарăн?—тесе вăрçа пуçланă хуçи картара улăм йаштаса тăракан сыснана курса.

— Епĕ çывăрма ăшă вырăн тупрăм!—тенĕ сысна.

— Ăста?—тĕлĕннĕ хуçи.

— Вулав çуртĕнче. Кăмака хыçне кĕрсе выртрăм та сысна пек харлаттарса çывăртăм. Халĕ вырăн айне хума улăм илсе кайас тетĕп-ха,—тенĕ сысни мăн кăмăллăн.

Ст. Матеш.

Рационализатăрсем.

Вăтакас Татмăш колхоз кăнцелеринче пĕр пукан та çук; хăйсем пичкесем, каткасем çинче ларса ĕçлеççĕ.

Художник В. Филиппăв ӳкерчĕкĕ.

Председателĕ:—Ку пичке ытла та çӳлĕ вара: алпусма нийепле те пĕшкĕнсе çитмеле мар. Çекретар йулташ, платниксем шыра-ха, пичкин тĕпне таттарас.

Çекретарĕ:—Платник мар унта, реконструкци тумала—сĕтелĕ çине ларса пички çинче ал пусмала тумала.

Кутăн.

Йегорăв сÿннĕ чĕлĕмĕнчен кĕлне шаккаса кăларчĕ те кантăк витĕр урамала пырса пăхрĕ. Урамра, кÿлĕ хĕринче, хаљ çеç шывран выљдаса тухнă хур чĕпписем пĕсехисене хыçса лараççĕ. Хура çунатлă, шурă купарчалă хураçи, кракăвски кăлбаса пек авăнчăк, вăрăм мăйне тăснă та, мерчен куçĕсемпе пĕре пĕлĕт çине, тепре урисем çине пăхса илет.

Пĕлĕт чăнахах питĕ илемлĕ пулнă вăл кунхине, ула хураçи ахаљтен пуçне чалăштарса пăхман ун çине. Икĕ ернипе пĕр тăтăшран çумăр çунă хыççăн, çанталăк уйартса йанă. Виççĕмĕш кун ĕнтĕ, хĕртсе хĕвел пăхат.

Пирĕн Йегорăв хур чĕпписене пăхса тăраннă хыççăн, тепре чĕлĕм туртас тесе кĕсйинчен тапак йенчĕкне кăларма пуçланăччĕ, урампа утă лавĕ иртсе пынине курах кайрĕ.

— Чимĕр-ха, атсемĕр,—терĕ вăл çамкине сылтăм аллипе çапса,—чимĕр-ха, йулташсем, пирĕн те утă пуçтарса пĕтермен вĕт-ха? Пуçтарас пулат. Епĕ мансах кайнă ун çинчен, йулташсем, — терĕ вăл пÿртре хăйĕнчен пуçне никам пулманнине куратăркаçах.

Тилпĕрен çисе минкĕренĕ сурăх пек, вăл пÿртре ик-виç хут çаврăннă хыççăн, алăкне хытă хупса хăварчĕ те чăхсене хăратса, урам тăрăх васкаса утнă.

— Да, — тенĕ вăл хăйне хăй — да, ĕлкĕрме çук ниçта та. Кунта каймала, унта каймала. Çуккă ĕлкĕрме. Вăт, калăпăр, утă пуçтармала. А кама пуçтарттарас? Кам кайса пуçтарса парĕ-ши? Найан пирĕн йал çыннисем. Кахал. Ĕçме çеç пултараççĕ, киккириксем. Ĕçме пулсан вара нимĕн те кирлĕ мар. Мăкăртатса пынă вăл сăмси айĕнчен.

— Улатимĕр Иванчă, ăçта кайатăн?—илтнĕ вăл сасă.

Пăхат: ĕçкĕ. Сĕтел çинчи сăра витри кантăкранах курăнса ларат.

— Инçе кайатăр-и?

— Çук, так çапла урам тăрăх...

Васкамастăр пулсан, кĕрĕр наччаса.

— Васкамаллийех çук та-ха. Пĕр минутлăха кĕрсе тухăп.

„Пĕр минутлăх“ тесе кĕни, тĕрĕссипе каласан, пĕр каçлăха тени пулат. Вăл кунхине Улатимĕр Иванчă утă пуçтарма никама та тупса йарайман: çын шырама вăхăт пулман.

Тепĕр кун ирхине вăл Кадейĕва хирĕç пулсан, мухмăрпа аптăранă çын „сыпмали“ тупнă пек хĕпĕртенĕ.

— Вăт мĕскер, Кадейĕв йулташ. Çаран çинче пирĕн пуçтарман утă выртат. Есĕ хăвăн бригадупа кайса пуçтарса кил, вара епĕ сана преми парăп.

— Премй-и-и? Мĕнле премй? Ĕскунне йĕркелĕ шутласан та йурĕ. Премй терĕ-ха.

Колхозниксем ăна шанми пулнине Йегорăв пайан кун çеç мар, тахçанах пĕлет, анчах вăл çапах та хăйне сума суманшăн çиленнĕ. Халĕ те Кадейĕв ăна çапла каланăшăн вăл хытă пăшăрханнă.

Анчах унта тавлашса тăма май çук: пайан Кадейĕв çав тери кирлĕ çын.

— Вăт, шанмаст тата. Парап тенĕ тĕк, паратăпах ĕнтĕ. Йепле премй!—тесе хĕскеленĕ вăл хĕрелнĕ куçĕсене.—Ну? Мĕнле?

— Кайма пулат. Улталамастăн-и?

— Каланă сана премй пулат тесе, пулатех.

— Ну, йурĕ. Каçчен пĕтерсе килетпĕр.

* * *

Кунĕпе тăрăшса ĕçленĕ Кадейĕв бригади çаран çинче. Хĕвел хĕртет, вăрăм тунасем çыртаççĕ. Йÿçлĕхре утă йĕпенет. Кадейĕв йулташсене васкатат,—хавхалантарат.

— Авантарах тăрăшăр, йулташсем, намăс курас мар. Каçчен пĕтерес. Премй пулат.

— Премй-и? Кам каларĕ?

— Улатимĕр Иванчă.

— Темĕн... шанчăк çук манăн ун çинче, — тет пĕри.—Шанмастăп епĕ ăна.

Каçхине Кадейĕв бригади ĕç пĕтерсе таврăнат. Чĕрисем пурин те саванна: пысăк ĕç туса килнĕ вĕт-хă вĕсем. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе пысăк ĕç тунă. Мĕн чул утă сайа кайнă пулĕччĕ вĕсем кайса пуçтарман пулсан. Пуçтарнă—сийен пулман. Йепле савăнмала мар?!

Пурте килĕсене апат çиме салансан, Кадейĕв председателĕ патне кайат. Бригадă членĕсене премй пулат тесе тăрăшса ĕçлеттернĕ-çке-ха вăл... Халĕ сăмах çине тăрас пулат. Кадейĕв канцелере васкаса пырса çитет. Анчах унта никам та çук. Çур сехетрен Йегорăв пырса çитет. Тăм илнĕ пăру урисем тайлăк-тайлăк уткалаççĕ.

— А-а, Кадейĕв йулташ. Ну, ĕçсем мĕнле? Пĕтертĕр-и?

— Пĕтертĕмĕр!

— Йурат. Аван. А епĕ сире премй хатĕрлерĕм, —тет вăл шкап патнеле тайкаланса.

— Акă!—пырса лартат Кадейĕв умне сĕтел çине икĕ литăр ерех.—Есĕ памĕ терĕн пулĕ? Вăл кăна мар. Тата икĕ литăр пур,—тет вăл икĕ хул хушшине тата икĕ литăр хĕстерсе.—Тепĕрне епĕр тепĕр членпа ĕçсе йатăмăр, пробут туса. Лайăх, питĕ хайар,—мухтат Йегорăв ерехне.

Кадейĕв тĕлĕннипе ăнтан кайнă та, ним тума аптраса ĕнсине хыçса тăрат.

— Есĕ премй парап терĕн вĕт?

— А ку премй мар-и мĕн? — куçне хĕскелет Йегорăв.—Мĕнтен кайа премй ку? Ну, аça çапнă çын пек, минкĕресе ан тăр. Ăçта бригадă членĕсем? Айда. Пĕрле ĕçĕпĕр. Пулăшăп хам та как никак,—утат вăл икĕ хул хушшине икĕ литăр хĕстерсе.

Кадейĕв нумайччен пăхса тăрат те, тарăхнă пирки икĕ литăрне те илсе Йегорăв хыççăн урамала вăрăнтарат.

Ĕçне сут аллине панă. Йегорăва тивĕçлĕ „премй“ парасса кĕтеççĕ.

Сергей Йалавин.

Внукӗпе аслашшӗ.

Тин ҫеҫ хаҫат ҫинчен куҫне илнӗ Коҫкӑ пионер кӑмака сакки ҫинче кехлетсе ларакан аслашшӗ умне ҫитсе тӑчӗ те:

— Ну, йумах калам-и, асатте?—кулараххӑн хыпашларӗ вӑл аслашшин аллине.

— Мӗн? Турӑ ҫукки ҫинчен-и?—ыйтрӗ аслашшӗ ӑрахӑн.

— Ҫук.

— Електрицӑ ҫинчен-и?

— Ҫук. Пӑхатырсем ҫинчен. Есӗ калакан пӑхатырсенчен те вӑйлӑраххисем ҫинчен. Чӑн-чӑн тӗнчере халӗ пурнакан, вут чӗрелӗ ҫынсем ҫинчен,—терӗ Коҫкӑ.

Ку сӑмахсене илтсен старик шартах сикрӗ. Ытлах та хӑрарӗ вӑл вут чӗрелӗ тенӗ сӑмахран.

— Кай, Куҫук ачам, вут чӗрелех пулсан, етемех мар пуль вӗсем?

— Етемех, асатте, етемех. Хӗрӳлӗ ҫынсем. Сан йумахунти пӑхатырсенчен те нумай хӗрӳлӗскерсем,—тавӑрчӗ Коҫкӑ кӗскенреххӗн.

— Добрынь Никитичран та иртерекен етем-и вара? Унтан та пултаракан ҫынах тӗнчерех ҫуралнӑши-ха?

— Унтан темиҫе хут хӑватлӑ ку етем—Бусыгин. Автомашинсен ашшӗ,—ӑнлантарать Коҫкӑ.

— Ҫук пуль, Куҫук, ҫук пуль. Добрынь Никитич 12 пуҫлӑ ҫӗлене ҫапӑҫса ҫӗнтернӗ. Ӑнах ҫитеймест пуль сан паттӑру,—тет аслашшӗ тӑрӑшсах.

— А ку вӗт пӗччен 8 сехетре 780 коленчатӑй вал туптанӑ,—ответлет Коҫкӑ.

— Ну, ҫапах та, Буслай Ваҫҫине ҫитес ҫук ун хӑвачӗ. Ваҫҫа вӗт хӑрах аллипе 80 пӑтлӑ хӗҫе йаштах туртса кӑларнӑ ҫӗр айӗнчен,—парӑнасшӑн мар пулса, ҫинех тӑрать аслашшӗ.

— А-а, Степаненко 33.672 пӑт кӑмрӑка, ҫӗр айӗнчен туртса кӑларнӑ,—кулать Коҫкӑ.

— Ытла ҫӑвар выльататӑр есӗр, ҫамрӑк-ха, ҫамрӑк,—тет аслашшӗ ҫиленсех.—Ай, тепӗр тесен, кӑтартӑттӑм епӗ сире Илйа Мvремец вӑйне...

— Пӗлетӗп, асатте, пӗлетӗп,—пӳлет аслашшӗне Коҫкӑ.—Намӑссӑр Ильйене те пӗлетеп, Ильйе пек киревсӗр ҫынсене совет саккунӗ сута парса айӑплать, асатте. Хура хӑма ҫине ҫыратпӑр халӗ ун пеккисене. Пухура пӗҫертнӗ пулӑттӑмӑр ӑна,—хӗрӳленет Коҫкӑ.

— А ҫапах та вӑл вӑйлӑ пӑхатыр вӗт,—тет аслашшӗ йӑвашшӑн.

— Пирӗн унтан вӑйли Стаханӑв пур,—тет Коҫкӑ паттӑрӑн.

— А пирӗн герой Александӑр Невский.

— Пирӗн Чапайӗв.

— Пирӗн Ильйе пророк, пӗлӗтре ҫӳрекенни.

— А пирӗн Коккинакки, Громов, Ляпидевский...—харӑсах ҫич-сакӑр йат калать Коҫкӑ.

— А еп хам Стаханӑв пек, Бусыгин пек пӑхатыр пулатӑп,—тет Коҫки татах.

— Миҫене ҫитеҫҫӗ-ши вӗсем? Теҫетке те пурши вара ун пеккисем ҫӗр ҫинче?—парӑннӑ сасӑпа ыйтать аслашшӗ.

— Вӗсем пинпе. Хапрӑк-савӑт, шахтӑ, уй-хир пинпе ӗрчетеҫҫӗ вӗсене.

— Ҫӗр чӑтайми пулӗ, ачам, ҫӗр чӑтайми,—тет аслашшӗ шухӑша кайса.

Чӑнах та тӗлӗнмелипех тӗлӗнет унӑн 60 ҫулхи чӗри. Вӑл патшан йӳҫӗк саманинче пурӑнса, йумахсем урлӑ турӑ пуррине, темле Ильйе Муромец, Добрынь Никитич, Ваҫили Буслайӗв пур тенине илткеленӗскер, халӗ вӗсенчен хӑватлӑ етемсем пинпе шӑтса тухнӑ тесен, турӑран хӑватлӑ—електрицӑ, радио, тем-тем пур иккенне илтсен пуҫне пӗр-ик хут хыҫать те:

— Тепӗр 30 ҫул кайарах ҫуралмала пулнӑ та, телей ҫапла килнӗ иккен,—тет вӑрӑммӑн сывласа.

М. Шенгер.

Хула ҫывӑхӗнче.

Хуласен тавраш не тислӗксем нумай тӑкаҫҫӗ, анасем ҫине кӑларм аҫҫӗ.

Н. Евграфов ӳкерчӗкӗ.



— Хулана ҫывхаратпӑр пулмала?

— Мӗнтен пӗлетӗн?

— Сӑмсана тавӑрас пек шӑрӑш кӗре пуҫларӗ.

Физикӑ урокӗнче.

Учитлӗ ачасем иртнӗ урока йепле ӑнланнине тӗрӗслеме пуҫларӗ.

— Кала-ха, Иванов, йапаланӑн йепле свойствӑ пур?

— Пур йапала та ӑшӑтсан сарӑлать, сивӗтсен пӗрӗнет.

— Ҫук!..—илтӗнчӗ тепӗр сасӑ.—Ку тӗрӗс мар.

— Иепле тӗрӗс мар?

— Акӑ Шупашкарти „Динамо“ магазиннех илес. Ҫулла, шӑрӑх чух, йӗлтӗрсене 15 тенкӗпе сутатчӗ, ҫав магазинах хӗл ларчӗ те, йӗлтӗрсен хакӗсене сарса йачӗ. Халӗ ҫав 15 тенкӗпе сутнӑ йӗлтӗрсенех 22 тенкӗпе сутать. Учитлӗ хирӗҫлеймерӗ.

Иван Алтай.

Манăн кино.

Нук-кă, нук-кă, пĕр çĕре,
Пĕр çĕре.
Симĕс курăк çĕр çине,
Çĕр çине.
Епĕ сире пуçтарам,
Пуçтарам.
Кино-картин кăтартам,
Кăтартам.
Манăн картин йапăх мар,
Йапăх мар:
Ухмах Йăван çинчен мар,
Çинчен мар.
Курпун сысна çинчен мар,
Çинчен мар.
Уçук аппа, ес ан тар,
Ес ан тар.
Пирĕн çумма килсе лар,
Килсе лар.
Манăн кино ак çапла,
Ак çапла.
Пуриншĕн те пит чаплă,
Пит чаплă.
Карас пулă йашки пек,
Йашки пек.
Çийĕр: кинĕм, хунеми,
Хунеми.
Ывăл пултăр, кинеми,
Кинеми.
Акă пулли, суханĕ,
Суханĕ.
Йурне-варне хам йарам,
Хам йарам.
Хам тавара хам мухтам,
Хам мухтам.
Епĕ пăртак сисетĕп,
Сисетĕп.
Ман кинона мухтассине
Сисетĕп.
Мухтанмарĕ, суймарĕ,
Суймарĕ.
Чăннипеле каларĕ,
Каларĕ,—
Тесе есĕр тав тăвăр,
Тав тăвăр.
Ман кинона пит мухтăр,
Пит мухтăр.
Акă ĕнтĕ пуçлатăп,
Пуçлатăп.
Хам кинона кăтартма,
Кăтартма:

* * *

Ак ку картин кунти мар,
Кунти мар.
Кунти тесе суйас мар,
Суйас мар.
Тăван, кÿршĕ тутарсен,
Тутарсен,
Кивĕ Упи йалĕсен,
Йалĕсен.
Колхоз йачĕ „Броневик“
„Броневик“.
Пуçлăхĕсем такамсем,
Такамсем.
Йачĕсене пĕлместпĕр,
Пĕлместпĕр.
Çакна кăна пĕлетпĕр,
Пĕлетпĕр:
Канцеларри тăррине,
Тăррине,
Сыхламашкăн майрине,
Майрине.
Вутă хутса йарсассăн
Йарсассăн.
Пÿрчĕ хыпса кайасран,
Кайасран.
Тăратаççĕ хуралçă,
Хуралçă.
— Ех,—тейĕр халапçă,
Халапçă.
Халапçă мар, чăн халлап,
Чăн халлап.
Пĕр суйи çук, чăн калап,
Чăн калап.
Чăн сăмахăн суйи çук,
Суйи çук.
Кив Уписен тăрпи çук,
Тăрпи çук...



Акă кусем кунтисем,
Кунтисем.
Мартынкасси йалĕсем,
Йалĕсем:
„Хĕвел тухăç“ колхозĕ,
Колхозĕ.
Кахалсенĕн мăн тусĕ.
Мăн тусĕ:
Лашисем те йĕвенсĕр,
Йĕвенсĕр.
Хăмăчĕсем пĕвенсĕр
Пĕвенсĕр,
Акă тата сыснисем,
Сыснисем
Улăмури ишеççĕ,

Ишеççĕ.
Ах, анчах мĕскĕнсем,
Мĕскĕнсем.
Витесĕрех тÿсеççĕ,
Тÿсеççĕ.
Вити пулнă пулсассăн,
Пулсассăн,
Вĕсем кунта пулас çук,
Пулас çук.
Ех, шеремет, çав касаť,
Çав касаť.
Вите çитмест, так сказаť,
Так сказаť...



Акă тепĕр картинă,
Картинă:
Авăн çапан машинă,
Машинă.
Енехметсен—Траксен,
Траксен,
„Хĕрлĕ йалав“ колхозăн,
Колхозăн.
Йур айĕнче савăнаť,
Савăнаť.
Шăм-шакĕпе авăнаť,
Авăнаť.
Еç пĕтернĕ хыçĕнчен,

Хыçĕнчен—
Çурхи хĕвел пăхиччен,

Пахиччен.
Канса выртат „курортра“
„Курортра“.
Ака пахăр—куратра?
Куратра?
Ака тарат мăк сухал,
Мăк сухал.
Варпуçĕнчи мăн кахал,
Мăн кахал.
И. Афанасĕв, теççĕ ăна,
Теççĕ ăна.
Санĕ пĕтнĕ çывăрса,
Çывăрса.
Ăçе тухман çăвĕпе,
Çăвĕпе.
Халь те çыврат хĕлĕпе,
Хĕлĕпе.
Ех, анчах, мăнтарăн,
Мăнтарăн.
Кахалпала мĕн тăвăн?
Мĕн тăвăн?

* * *

Çакăнпала пĕтереп,
Пĕтереп.
Кĕске, тесе, ан вăрçăр,
Ан вăрçăр.
Манăн çитес кинона,
Кинона.
Килме чунтан тилмĕреп,
Тилмĕреп.
Тепрехиччен сыв пулăр,
Сыв пулăр.
Сыв пулăр, та пур пулăр,
Пур пулăр!..

Сăсар çĕлĕк.

Уртемей хирти хуралçă
Тăснă тутлă ăйхине,
Пусĕнчен йытсем хываççĕ
Сăсар тирлĕ çĕлĕкне,
Кутăн-пуçăн тăлпалаççĕ,
Пытараççĕ тыр ăшне.
Çамкине ўксессĕн сывлăм,
Тăнă имĕш Уртемей,
Вăрăсем тивмен, тет, сывă,
Çумĕнчех иккен телей.
Çĕлĕкĕ çук—хуйхă йывăр.
Ухтарат, тет, пур тĕле.
— Çĕлĕкў ăçта çухалчĕ!—
Ыйтнă арăмĕ пĕрре.
— „Çил сасартăках хускалчĕ,
Еп каçаттăм кĕперпе,
Çĕлĕке çапса ўкерчĕ,
Çырмана, вăта çĕре“.
Çапларах суйса парачĕ
Уртемей чылай вара.
Тыр вырас ĕçсем пуçланчĕç.
Кĕр-кĕрлерĕ пусăра,
Путене пĕрре хăпарчĕ
Вăрттăн тунă йăваран.
Кĕлтесем çыхан хĕрарăм
Тупнă унăн йăвине,
Сăсар çĕлĕкрен мăнтарăн
Йăва тунă путене.
Уртемей пичче, мăнтарăн,
Хыçкалат ĕнсе хыçне.

Уксай Йаккăвĕ

ПУСТАШОВ.

Тĕлĕнмеле çын вăл. Ĕлĕк, шкулта вĕреннĕ чухнех, ытти ачасенчен уйрăмрахчĕ. Вĕренессе питĕ йапăх вĕренеччĕ, ашкăнасран—никам та ăна çитекен пулман. Тата питĕ алă хыпанлĕччĕ: куç хупнă хушăрах мĕн те пулин хăй йулташĕсенне „шăхăртса“ сутса—премĕк, йе канхветкă илсе çийеччĕ... Пĕрре ĕçлеме кайсан епĕ пĕр уйăх хушши унпа пĕрле пурăнтăм. Питĕ тирпейсĕрчĕ, тата дисциплинă йенчен те ун пек йапăх çын пулман. Çитменнине тата çамрăк чухнехи йăлана унта та пăрахмарĕ: ăçта мĕн йапăх выртакана пуçтарма йуратаччĕ. Йулташсенне йапалисене вăрласа, пасарта сутса „йўççине“ тупса ĕçеччĕ... Мĕн чул лекнĕ пулĕ вăл... Ахалех мар—çавăнпа пулĕ—ăна йулташĕсем кулăшла „Пусташов“ хушамат кăларчĕçĕ те, çав хушаматпах пурăнчĕ вара... Епĕр Колчакпа вăрçма тухса кайсан, пирĕн Пусташов çул çинчех тарса йулчĕ... Çавăнтан вара епĕ ăна курман, манса та кайнă ун çинчен.

Пĕрре пасарта çўренĕ чухне курах кайап çакна: «çавах-ши»—тесе, ĕненмесĕр, куççене шăлсах пăхатăп.

— Есĕ-и ку, Пусташов? Йепле пурăнатăн? Мĕн ĕçре? Ăçта ĕçлетĕн?—тесе ыйтрăм çакăнтан тĕлĕнсе.

— У-у-у-у! Манпа мĕн калаçмала: таçта çитнĕ пулĕ епĕ. Темле ĕçре те ĕçленĕ. 1929 çулта техникум пĕтертĕм, пĕр çула йахăн техникра ĕçлерĕм... Ăна пăрахса халь суту-илў ĕçĕпе çыхăнтăм.

— Ма-ха есĕ ху вĕреннĕ ĕçпе ĕçлеместĕн? Сире вĕрентни те патшалăхшăн ахалех пулат вĕт?

— Ех, ухмах!—терĕ ку мана хирĕç:—Пулă тарăна, етем ывăл-хĕрĕ лайăха шырат... Техникре пурăнни мĕн усси пур? Ку таринччен епĕ çăкăр сутти магазинĕсенче прикашчикра пурăнса чылайах хăваркалаттăмччĕ. Халĕ çитми турттарнипе вăрçма пуçларĕç те—унта пурăнма питех тулки сахал... Тухрăм вăл ĕçрен. Халĕ пĕр çул ытларах сăра-ерех лапкисенче, пивнойсенче ĕçлекелетĕпха... Питĕ май кўреп вара, каласан ĕненес çук: Канашра сăра лапкинче пĕр уйăх хушшинче 400 тенкĕ ытла чистăй укçа хăвартăм...

— Неужели сăра-ерех лапкисенче те çавăн чул пысăк шалу параççĕ?

— Ех, чудак. Шалура мар унта ĕç... Шалу пысăках мар... Анчах пурăнма тĕлне пĕлмеле: халĕ сăрана пичкесенчен сутаççĕ вĕт, йаран пĕр пичке сăра ăшне пĕр витре тăрă шыв, вот сана укçа. Уйăхра миçе пичке сутан—пĕрер витре пичкерен хурса, витре сăра мĕн хак тăнипе хутласан, пысăк укçа пухăнат вĕт. Иртнĕ çулла Хусанта ерех лапкинче пĕр уйăхра 600 тенкĕ ытларах илтĕм. Хĕрлĕ ерех те пичкерен сутаççĕ, ну... значит, йаран шыв... Хĕрлĕ ерехĕ сăраран хаклăрах вĕт, значит—усси те чылайрах... Усĕр çынна шыв парсан та пĕлмест. Сиссен те, нимех те тумали çук: шыв панă пулсан—ан ĕç, кам хушнă сана! Жалăбă парас—хăйнех лайăх мар: „ку ĕçме йуратакан çын, çавăнпа та сăра-ерех çинчен тиркесе çўрет“—тесе шутлама пултараççĕ. Сăра, йе ерех çирĕпĕшне никам та виççе пăхакан çук... Миçе çын усă тураççĕ пуль çав ĕçпеле тĕлне пĕлекенсем? Мана хама та ăна техникре пурăннă чух пĕр прикашчик Сĕнтĕрвăрринче аса илтерсе ăс пачĕ... Анчах пĕр вырăнта нумайах пурăнма йурамаст— сиссе çитеççĕ. Халĕ Шупашкартан тухса кунта, Çĕмĕрлене, килтĕм-ха... Пивнойсенче, йе ресторансенче тупайратăп-и пĕр-пĕр ĕç... Тупсан—пырăр: шывпа хутăштарманнинех йарăпăр!—терĕ те, пуçне тайса, алă парса, уттарчĕ Пусташов ЗРК кантурĕ йенеле.

Шĕшкĕ Йаккăвĕ.

Футђарӗ кӑна.

Макар хӑй хӑҫан ҫуралнине тем чухлӗ шутласан та чухлаймаст. Вӑл хӑй пурнӑҫӗнчен нимех те астумаст. Мӗн пурӗ те ҫаксене пӗлет: пӗрре вӑл—панулми вӑрлама кайсан (ача чухне) улмуҫҫи ҫинчен татӑлса анса шараварӗ кӑшӑлӗнчен пуҫласа вӗҫне ҫитиччене ҫурӑлса тухнӑ, ун чух унӑн шараварсӑр киле таврӑнмала пулчӗ. Тепре тата хӑнана кайсан, палламасӑр, упӑшки тесе, Марине инкӗшӗ тӗттӗм ҫелникре чуп туса илнине. Урӑх нимӗн те астумаст.

Хӑйӗн пурнӑҫӗнче мӗн курни-илтнине маннӑшӑн, Макара суйат, теччӗҫ. Суйат теме те май пур. Пӗрре вӑл ӳсӗрпе пускил сыснине тапса ҫурӑ парахтарнине, тасалӑх комиҫҫи членӗн чуречине ҫапса ҫӗмӗрнине „астумастӑп“ тет; ҫавӑн чухнех Васили ачине йӗмне хӑпартса панине лайӑх астӑват.

Йалта пӗр вӑхӑтра ӑна куђтурлӑхшӑн, ӑслӑлӑха вӗренесшӗн хытӑ тӑрмашат теччӗҫ. Ҫтена хаҫачӗ ҫинче те пӗрре „килҫурт тасалӑхӗ, тирпейлӗх, тата ӑслӑлӑха вӗренес тӗлӗшпе Макарпа танлашӑр“ тесе ҫырнӑччӗ. Шкулти астрономи кружокне пӗр заңати сиктермесӗрех ҫӳреччӗ, унта та вӑл активлӑ, хытӑ ӑнланаччӗ.

Ҫӗр хӗвел тавра ҫавӑрнат, хӑйӗн тавра та ҫавӑрнат. Планетӑсем пӗр чарӑнмасӑр харпӑрхӑй ҫулӗпе кӑна ахӑрса вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ, тесе вӗрентнӗ кружокра.

— Ха-ха, ҫӗр вӑл... мӗн... пуҫ ҫавӑрӑннӑ путек-и мӗн-ха ҫӗр тавра ҫавӑрӑнма?—ӗненмен Макар.

— Ҫӗр, вӑл питӗ хытӑ шӑват...

— Апла пулсан, пӗрре ҫӗртен татӑлса йулсан хуса ҫитме ҫук вара. Епӗ питӗ хытӑ ҫывӑратӑп, ҫывӑрса йулас марччӗ,—тенӗ Макар.

— А вӑт пирӗн ҫӗре пӗр-пӗр ашкӑнса ҫӳрекен клас тӑшманлӗ планетӑ пырса ҫапӑнма пултармаст-и?—хӑраса ыйтнӑ вӑл.

— Пултараймаст!—тесе хӑйне-хӑйех пусарма тытӑннӑ. А мӗн ытлашши уншӑн хуйхӑратӑп? Мана мӗн питех? Хам йапаласене кутамкаласа чикеп те вӗҫтеретӗп кӑна тепӗр планетӑ ҫине.

— Епӗ хађ ӑслӑлӑхсене во! мӗнле пӗлетӗп,—шӗшлӗ аври пек мӑкӑђӑк пуҫ пӳрнине тӑратса кӑтартнӑ Макар.

Пӗр сӑмахпа: тӑрӑшнӑ. Ҫынсемпе хирӗҫ пулсан чарса алӑ парса илнӗ. Курмасӑр иртсе кайакансене хуса ҫитсе „Здравствуй“ тесе алӑ панӑ. Лешӗ: Сан мӗн ыйтмали пур-и?“—тесен: „Ҫук, санпа ал тытас терӗм“ ответленӗ Макар.

Макар куђтурлах пулнӑ ҫав. Йака тумланнӑ, кӑвак кӗпе ҫинчен сумӗс калстӑк ҫакмасӑр урама та тухман. Тумтирӗнчен одеколон шӑрши кӗнӗ. Пухусенче вӑл куђтурӑ, тасалӑх, ӑслӑлӑха алла илесси ҫинчен ҫӗмӗрттернӗ. „Мунча кӗресси, урай ҫӑвасси, кӗпе-йӗм улӑштарасси, пӗр-пӗрне йуратасси, кӗнеке-журнал вуласси“ пулнӑ ун сӑмахӗсем.

* * *

Макар пурнӑҫне таврари халӑха кӑтартса куђтурлӑ пурӑнма вӗрентес тесе пӗрре темле комиҫҫи килсе кӗчӗ ун патне. Ун сӑнне райхаҫат ҫине ҫапас тесе пӗрле фотоаппарат илсе пынӑ. Темле комиҫҫи терем епӗ, ҫук, йалти куђтҫут комиҫҫи (унта Макар та члента пулнӑ), тата хаҫат редакцинчен пӗр ҫын. Макар ун чух кӑмака ҫинче хура тӑлла пек кӗпепе урисене тӑрпа ҫине улӑхтарса хурса ҫывӑрнӑ, кӗтесре, пӗр куйкӑ хитрескерларнӑ. Ун айӗнче темшӗн виҫӗ чӑх, пӗр автан какаласа выђанӑ. Урайӗнче ҫӗрулми хуппи, мучаланнӑ ыраш уламӗ, ҫӑкӑр чӗллисем арпашса выртнӑ.

— Есӗ-и вӑл Макар?

—Ѳй, епӗ!—тесе хыпаланса сиксе анса пылчӑклӑ кӗпе ан курӑнтӑр тесе кӑвак сатинне тӑхӑнса йанӑ вӑл. Одеколон та сапнӑ.

— Урайне хӑҫан ҫунӑ?

— Астумастӑп. Хӑҫан ҫунине арӑм пӗлет пуђ, еп урай ҫумастӑп вӗт. Марйе, хӑҫан ҫунӑччӗ-ха ҫав?—ыйтнӑ Макар пӳрнине сурчӑкпа шӑлкалса.

— Мӗн хӑҫан пулас-ха, иртнӗ уйӑхӑра анчах ҫунӑ, уйӑх та иртмен!—тенӗ арӑмӗ ҫилленсе.

— Урай ҫуман,—сас панӑ кӑмака хыҫӗнчи ачи.

— Ей, еп сана!—чӗн пиҫехипе йунанӑ Макар.

— Мунча хӑҫан кӗнӗ?

— Мунча кӗни те нумай пулмаст, авӑн ҫапса пӗтерсен. Астумастӑп.

— Мунча кашни кунах кӗртет вӑл, ӗнер те айӑк пӗрчисем авӑнса кайиччен хӗнерӗ!—тенӗ арӑмӗ. Макар лайӑххӑн йунама та ӗлкереймен.

— Мӗншӗн суйатӑн, айӑкран ӗнер мар, виҫӗм кун ҫапрӑм, пуртӑ аврипе ӗнер ҫурӑмран. Ех, куђтурсӑр, ҫавна та маннӑ!—кӑшкӑрнӑ тарӑхса арӑмӗ ҫине.

Комиҫҫи темшӗн ним те шарламан. Тӗлӗннипе ҫеҫ пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илнӗ.

— Макар, есӗ ху вуланӑ кӗнекесене кӑтарт-ха?

— Мӗнле кӗнекесене? Астумастӑп.

— А вӗт есӗ вуланисене?

— Мӗн калаҫатӑр есӗр? Ман нимӗнле кӗнеке те вихҫан та пулман. Вӑн ҫавӑнта лапкаран пулӑ чӗркесе килнӗ хаҫат татӑкӗ пурччӗ, тӗлӗннӗ Макар.

— Есӗ хут пӗлетӗн-и ара, Макар?—ыйтнӑ арӑмӗ унтан.

— Ӑслӑлӑхпа куђтурӑ ҫинчен нумай калаҫатӑн, ара, ӑҫта вӑл санӑн?—ыйтнӑ Варвари кинеми.—Епӗ карчӑк пулин те хаҫат та вулатӑп, урай та таса.

— Тӗлӗнтеретӗр. Ҫапла пӗлтермесӗр килме йурат-и вара. Сирӗн малтан калас пулаччӗ. Епӗ арӑма урай ҫутарттӑмчӗ, тен мунчана та кайса килнӗ пулаттӑмӑр. Епӗ сире хӑтлантарса ҫӳретӗп!—кӑшкӑрса йанӑ Макар.

Хӑнасем тухса кайсан та вӑл кӑшкӑрса йулнӑ..

— Футђарӗ кӑна!—тенӗ тухса кайакансем.

Н. Кођушкин.

Националиссемпе есерсем.—Ку пирĕн памйатник пулас... Ларас улăхса!
Рабочи:— Улăхас? Сирĕн вырăн историн шăпăр кĕтессинче!

МУНЧА.

Хăшпĕр йалсовечĕсем йалти колхозниксемпе ĕçхалăхне мунчасем лартса, таса пурăнма вĕрентес вырăнне, йалсовет аллине куçнă мунчасене никама памасăр вутă туса хутса пĕтереççĕ.

— Ех, пĕре хам ватăлса виличчен мунча кĕрĕттĕм... Чылай вăхăт пулат ĕнтĕ еп мунча кĕменни, пĕркуннех, пĕр икĕ уйăх та ытла пулĕ, хамăрăн Лешкасри аннесем патĕнче кĕрсеттĕм те, çавăнтан вара та кĕмен... Хаљ пĕтĕм шăм-шак кĕçтекен пулчĕ. Ех, мунча-а-а... Аçта, хăçан тепĕре мунча кĕрем-ши? Камăн мунча пур-ши? Кам мунчине хутамши?.. Тем, урăх вилличчен те мунча кĕресси пулмасť пулĕ-и?—терĕ те Сăпани аппа, икĕ уйăх ытла шыв курман çурăмне, чусталлă кăвас чĕресине мăка çĕçĕпе катăрттарса хырнă пек, катăртаттарса хыçса илчĕ. Çурăмне хыçса илсен унăн икĕ ерне ытла касман чĕрни хушшисене сахалтан та пĕр 20 грам пулĕ ўт çийĕнчи тасамарлăх çыпçăнса тухрĕ. Есĕр, тен вулакан йулташсем, унăн вăрăм тăватă ерне ытла касман чĕрнисенчен те: —Ма вара çав вăхăтах чĕрнисене касман-ши—тесе тĕлĕнеттĕр пулĕ. Çук, Сăпани аппан вăрăм чĕрнисенчен нимĕн тĕлĕнмели те çук. Вăл ăна йури çавăн пек, хăйĕн ўт-тирĕсем çийĕнчи тасамарлăхсене хырса тасатма ўстернĕ. Тепĕр майлă каласан—унăн чĕрнисем хăйĕншĕн мунча.

— Манăн та шăм-шак кĕçтег, епĕ те чылай вăхăт пулаť мунча кĕменни,—терĕ те, Сухви аппа та хăйĕн таса мар, и ç-виç уйăх ытла шыв курман, пыљчăклă ĕнсине катăртаттарса хыçса илчĕ..

—Аçта, камăн мунча пур-ши? Камăн мунчине хутас-ши?

— Тем, виличчен те мунча кĕресси пулмасť пулĕ. Кам мунчине хутас? Пўртрех, сив шывпах çăвăнас пулĕ?—терĕ те, Сăпани аппа кĕпе вăлашкине пĕр витре сив шыв йачĕ те, кĕпине хывма тытăнчĕ.

— Тăхта-ха, Сăпани тăхлачă!—терĕ Сухви аппа йалта мунча пуррине астуса илсе,—капла сив шывпах ан çăвăн-ха, сив шывпа çăвăнсан çын пăсăлма та пултараť. Тăхта-ха, тăхта—сив шывпа çăвăнма... А йалта йалсовет аллине йулнă кулак мунчи пур вĕт. Тавай йалсоветне кайса ыйтар. Председател мунча хутса кĕме чармасť пулĕ. Унăн таса пурăнтарма тăрăшмала...

— Чăнахта-çке, ара—терĕ Сăпани аппа кĕпине

Шыв черетĕнче.

Ишлейри вăтам шкулта 230 ача ытла вĕренеççĕ. Переменăсенче шыв ĕçме черете тăрса вăхăт иртет. Хăш пĕрисем икĕ-виçĕ хут черете тăрса шыв ĕçме черете çитеймеççĕ. Пĕр катка унта, пĕр курка.

В. Малышев.

В. Макарăв художник ўкерчĕкĕ.

Ачасем черетре: — Есĕ паçăрхи черетре çукчĕ-ха. Пĕрре черете тăрсах шыв ĕçесшĕн.

— А епĕ кунта виçĕ хут тăратăп...

„Раштав кӳллинче“.

В. Макаров художник ӳкерчӗкӗ.



Ех, мӗнтарӑн ӗҫкӗ-ҫикӗ!
Пулӗ-ши сан хӑҫан чикӗ?

Санпа пӗтет мӗн чул пурнӑҫ.
Йепле курат етем хурлӑх?!

хывма чарӑнса. Аҭа хӑвӑртрах, тен урӑххисем пырса хутӗҫ,—терӗҫ те, йалсоветне тухса утрӗҫ.

* * *

Йалсовет канцеларийӗнче пӑрлӑ тинӗс ҫийӗнчи пекех сивӗ, сурсан сурчӑк та ӳкмест, пӗтӗмпех тута ҫумне шӑнса ларат. Йалсоветӗнче ӗҫлекенсем пурте кӗрӗксемпе, алсасемпе сӗтел хушшине кӗрсе ларнӑ та пурте хутсемпе тӗрмешкелесе лараҫҫӗ..

— Ы-ых сивӗҫке!—чӗтӗрет председателӗ,—шӑнса вилетпӗр капла ларса.

— Мӗн хутас? Вутӑ ҫук!—ҫӳҫенсе илет ҫекретарӗ.

— Как ҫук?.. А пирӗн алӑра кулак мунчи пур вӗт. Ҫав мунчана пӑсас та, хутас. Шӑнса вилсе йала култарӑн тата,—ответлерӗ счетовод.

— Чӑнахтаҫке,—ҫирӗплетрӗ председателӗ,—мӗн тума кирлӗ пире вӑл мунча. Ҫапла калаҫса ларнӑ вӑхӑтра Сӑпани аппапа Сухви аппа кӑштӑрт кӗрсе тӑчӗҫ.

— Мӗн ӗҫпе килтӗр?—ыйтрӗ председателӗ.

— Мунча хутас тетпӗр те, пире йалсовет аллинчи мунчана хутса кӗме ирӗк парӑр-ши?—ыйтрӗҫ Сӑпани аппапа Сухви аппа.

— Хамӑрах хутатпӑр!—ответлерӗ счетовод.

— Аҭа, пӑчӑкӑ ил, епӗ пуртӑ илетӗп,—терӗ председатӗл ҫекретарне,—мунчана кайатпӑр. Пӗри пӑчӑкӑ, тепри пуртӑ илчӗҫ те, мунчана тухса карӗҫ. Вӗсем хыҫҫӑн Сӑпани аппапа Сухви аппа та:

—Вӑт пирӗн йалсоветӗнче ӗҫлекенсем ытла та ырӑ кӑмӑллӑ. Халӑха таса усрас теҫҫӗ. Ав йепле, кӑшт килсе каларӑмӑр кӑна, мунча хутма тухса карӗҫ,—тесе савӑнса килӗсене таврӑнчӗҫ.

* * *

Хӗвел каҫалана сулӑнсан Сӑпани аппапа Сухви аппа шур кӗпе йӗмсем илсе мунчана тухса утрӗҫ.

— Ну, пайан пӗрре,—терӗ Сӑпани аппа,—шӑмшак каничченех вӗри шывпа ҫӑвӑнатӑп ӗнтӗ.

— Епӗ те шӑм-шак каниччен ӳт-тире вӗри шывпа пӗҫертетӗп. Ес супӑнь илнӗ-и? — ыйтрӗ Сухви Сӑпанирен.

— Илнӗ, супӑньсӑр мӗнле мунчана кайан...

— А-па-пап-паай, етсемри!—тӗлӗнсех кайрӗҫ Сӑпани аппапа Сухви аппа йалсовет мунчи патне ҫитсен.

Мунча вырӑнӗнче пӗр мунча пӗрени те, никӗсӗ те ҫук. Пӗр мунча кӑмаки кӑна мунча вырӑнне хурал тӑма ларса йулнӑ пек ларат, тата пӑчӑкӑ кӗрпи ӑҫта кирлӗ унта сапаланса выртат. Урӑх нимӗн те ҫук.

— Ӑҫта кайса кӗнӗ мунча? Ӑҫта тарнӑ? Никам та курман, никам та илтмен, никам та пӗлмеҫҫӗ.

— Ей, мунча, ӑҫта тартӑн есӗ? Ҫук, Сӑпани аппапа Сухви аппана никам та хирӗҫ сас памарӗ...

— Мӗнле пӑчӑкӑ кӗрпи ку?—ыйтрӗ Сӑпани Сухви аппаран хайӗн ури айӗнчи пӑчӑкӑ кӗрпине асӑрхаса илсе,

— Ей, ара, чӑнах та, паҫӑр председатӗлпе ҫекретар мунчана пӑчӑкӑсемпе, пуртӑсемпе килчӗҫ. Вӗсем мунча хутма мар, мунча пӗренисенчен вутӑ тума килнӗҫке,—терӗ Сухви.

Марк Дангер

Хӳресӗр ҭыха.

Инçе те мар, çывӑх та мар; авал та мар, хаљ те мар пурӑннӑ тет пӗр чӑваш. Пурнӑçӗ пит чухӑн пулнӑ. Никам та ӑна сумас уман. Çӗр валеçнӗ чух ӑна чи начар ана парса хӑварнӑ. Çавӑнпа та унӑн тырӑ аксан та, нихӑçан та хӑй çӑкӑрӗ çиме çитмен. Йалан сутӑн илсе тӑранса пурӑннӑ.

Пӗрре çапла ана Шӑнту тӑррине ана панӑ: „Кунта аксан та, акмасан та пурӗпӗр пулмасҭ"—шухӑшласа тӑраҭ чуллӑ ани çине пӑхса.

— Старик!—тет арӑмӗ.

— Мӗн?—çавӑрӑнса пӑхаҭ чӑваш.

— Ку чуллӑ ӑна çине тырӑ аксан та, акмасан та пурӗпӗр пулмасҭ. Вӑрлӑха сайа йариччен, айта дыђӑ акса пӑхар. Тен, турӑ парсан, пулӗ.

— Йурӗ,—килӗшет чӑваш арӑмин сӑмахӗсемпе. Сарӑ кӗсрине кӳлсе, сухаласа дыђӑ акаççӗ.

Дыђӑ ӳсет, çеçкисем калама та çук вайлӑ. Анчах ани çинче мӗн пурӗ те пӗр дыђӑ кӑна.

„Мӗн тӑвас ӗнтӗ кунпа: çисен—çимелӗх çук, сутсан—сутмалӑх?".. шухӑша кайаҭ чӑваш.

Шухӑшласан-шухӑшласан шыраса тупаҭ: „çийес мар ку дыђӑна, сутас. Хаклӑраха сутас".

Сарӑ кӗсрине урапана кӳлет те, йалсем тӑрӑх дыђӑ сутма тухса кайаҭ. Урам тӑрӑх кӑшкӑрса пыраҭ.

— Сутап, сутап!

Мӗн сутаҭ? Ӑна каламасҭ.

— Мӗн сутатӑн?—ыйтаççӗ хирӗç пулакан çынсем.

— Кӗсре çӑмарти,—кӗскен тавӑраҭ чӑваш.

— Ухмах! Кӗсре чӑхӑ мар, вӑл çӑмарта тумасҭ. „Ӑсӗ ларса çитеймен çын пуљ ку"—тесе пӑрӑнса кайаççӗ çынсем чӑвашран. Никам та ӗненмест. Чӑваш пӗрех кӑшкӑрса пыраҭ.

Ак пуп арӑмӗ чупса тухрӗ:

— Мӗн сутатӑн?

— Кӗсре çӑмарти,—йаланхи пек кӗскен тавӑраҭ чӑваш.

Пуп арӑмӗ тӗлӗнсе кайаҭ:

— Мӗнле-ха, кӗсре те çӑмарта тӑватим?

Ӗненмесен ак тытса пӑх,—урапа çинче вырта-кан сарӑ дыђӑ çине кӑтартаҭ.

Пуп арӑмӗ пӗрре дыђӑ çине, тепре кӗсре çине пӑхаҭ те:

— „Чӑнах пуљ. Кӗсри те сарӑ, çӑмарти те сарӑ" шухӑшлаҭ. Унтан пӳртне чупса кӗрет:

— Пачӑшкӑ, пӗр чӑваш кӗсре çӑмарти сутма килнӗ.

— Ан ухмахлан, матӑшкӑ.Кӗсре çӑмарта тӑваҭ-и,—вӑрçса тӑкаҭ пачӑшкӑ.

— Мана ӗненмесен, тухса пӑх. Ак, тупата,—турӑшӗ çине пӑхса сӑхсӑхаҭ матӑшкӑ.

Пуп арӑмин сӑмахне пӗрре ӗненсе, тепре ӗненмесӗр, кула-кула чӑваш патне тухаҭ:

— Мӗн сутан?

— Кӗсре çӑмарти!

— Ан ухмахлан! Ӑçта-ха, кӑтарт!

— Ав, пӑх. Куçна шанмасан, аллупа тытса пӑх.

Пуп дыђӑна пурнипе чышкаласа пӑхаҭ:

— Чӑнах вӗт, çӑмарта,—пуп ӗненсе çитет.

— Суйма пӗчӗк ача мар вӗт епӗ.

— Мӗн тума йураҭ ку çӑмарта?

— Хе, мӗн тума?Пусса ларсан ҭыха кӑларма пулаҭ.

— Мӗн хак ыйтатӑн.

— Хаклӑ мар: çӗр тенкӗ.

— Айта илер, матӑшкӑ.

— Илер. Тен амӑшӗ пекех сарӑ ҭыхах кӑларӑпӑр.

Унтан чӑваш пуппа арӑмне мӗнле майпа пусса ҭыха кӑлармалине каласа параҭ:

— Кӗсре ҭыха кӑларас тесен—хӗрарӑм пусса лармала, ӑйӑр ҭыха кирлӗ пулсан—арçын пусса лармала...

Чӑваш укçана кӑсийине чикет те, çавӑрӑнса пӑхмасӑр килне вӗçтерет. Пуппа арӑмӗ дыђӑна йатса кӗреççӗ.

Çыхӑну çыхӑнман çӗрте

Художник Çверчков ӳкерчӗкӗ

Хӑшпӗр йалсовечӗсем колхоз пурнӑçӗ çине сахал çавӑрӑнса пӑхаççӗ.

Сысна; — Предçедатӗл йулташ, колхоз вите туса паманни çинчен жалӑбӑпа килтӗм те!...

Пӑру — Ах, ан вӑрат! Ӗнер кӑна çывӑрса кайнӑ. Вӑхӑтсӑр вӑратас мар. Çитменнине, витешӗн пулсан, ан та çӳре. Епӗ хам та çак кӑнцељаринче виçӗ уйӑх пурӑнатӑп.

Чылайччен пуппа арӑмӗ тавлашаҫҫӗ; мӗнле ҭыха пусса кӑларас: айӑр-и, кӗсре-и? Тавлашсан-тавлашсан пуп ҫӗнтерет. Айӑр ҭыха пусса кӑлармала тӑваҫҫӗ. Пуп дыӈа ҫине хӑпарса ларать.

Пӗр кун ларать, икӗ кун ларать. Ҭыха тухасса кӗтеҫҫӗ.

Шӑп ҫав вӑхӑтра пӗр чӑвашӑн арӑмӗ вилет. Вӑл вӑхӑтра вилнӗ ҫынна пупсӑр пытарма йураман. Ҫавӑнпа чӑваш лаша кӳлет те пуп патне пырать:

— Пачӑшкӑ, арӑм вилчӗ, пырса пытарса пар.

— Ман хаӆ ҫӳреме вӑхӑт ҫук. Епӗ кӗсре ҫӑмартине пусса ларатӑп.

Чӑваш йӑлӑнать:

— Тархасшӑн пырса пытар. Виҫӗ кун ӗнтӗ, шӑршлана та пуҫларӗ. Мӗн чул ыйтан—ҫавна парӑп.

Пуп йулашкинчен килӗшет.

— Пырасса пырӑп та, есӗ мана йӑвампах лартса кай. Асту, ан чӗтрет. Ҭыхалӑ ҫӑмартана ҫӗмӗрсен пуҫу та ҫитмӗ. Ҫӗр тенкӗ тӑрать вӑл.

— Ҫук, ҫук, пачӑшкӑ, еп сана хуллен илсе кайӑп.

Хай чӑваш пупа йӑви-мӗнӗпе лартать те, ҫул ҫине тухать.

Урапа кӑшт чӗтре пуҫласанах:

— Асту, хуллентерех!—асӑрхаттарать пуп.

Сасартӑк ҫавраҫил тухать те, пупӑн пуҫӗнчи шӗлепкине вӗҫтерсе кайать. Ҫӳҫӗ мӗлке пек лапӑстатать. Чӑвашӑн лаши хыҫалала ҫавӑрӑнса пӑхать те, пуп ҫӳҫӗнчен хӑрать. Хӑлхисене йалт-йалт выӆатса, сасартӑк сиккипе пӗр вырӑнтан тапса сикет. Пуп хыҫалала йӑви мӗнӗпе тухса ӳксе йулать. Ӳкнӗ май айӗнчи дыӈа пӑшал пенӗ пек шартлатса ҫуралать. Ҫав сасӑран хӑраса ҫултан инҫе мар пӗр мулкач тухса тарать. Пуп мулкача курсан сиксе тӑрать те, хыҫӗнчен чупса кӑшкӑрать.

Мулкач хӳрине сирпӗтсе пушшех те хытӑрах тарать.—Ех, шеремет! Ҭыха пулсах ҫитнӗ. Хӳри ҫеҫ ӳсӗе ҫитеймен. Шуйтан чӑваш арӑмӗ, вӑхӑтсӑр вӑхӑтра вилнӗ!—вӑрҫса тӑрать пуп.

Чӑвашӑн лаши ҫавӑрна-ҫавӑрна пӑхса тарать пупран.

— Ҭпру, тпру!—кӑшкӑрать, чӑваш тилкӗпинчен туртса.

Аҫа-ҫиҫӗм пек ҫиҫтерсе пырса кӗрет йала чӑваш. Пӑхать: урам тӑрӑх халӑх кӗрлесе килет. Халӑха курсан лаши тӑп чарӑнать. Хӑваласа та утмасть:

— Но-о!—кӑшкӑрать чӑваш.

Халӑх кӗрлесе ҫитет. Ак тамаша, унӑн вилнӗ арӑмне пытараҫҫӗ.

Чӑваш урапи ҫинчен сиксе анать те, ҫӗлӗкне илсе:

— Сывӑ пул, арӑм! Йӑвӑр тӑпру ҫӑмӑл пултӑр!.. тесе йулать.

Халӑх йумахӗ тӑрӑх
М. Данилӑв-Чалдун ҫырнӑ.

Сӗтелсен канашлӑвӗнчен.

Нумай пулмасть, епӗ сӗтелсен канашлӑвӗнче пултӑм. Вӗсем хӑйсен пурнӑҫӗпе прависем ҫинчен сӳтсе йаврӗҫ. Хӑш—пӗрисен ытла та кансӗр пурнаҫҫӗ. Лайӑх пурнаканнисем те пур. Анчах епӗ ку ҫырура вӗсен хушшинчи кансӗрлӗхсене ҫеҫ аса илесшӗн.

Акӑ мӗн калаҫҫӗ вӗсем:

— Епӗ Вӑрмар РИК-ӗн ҫӗр пайӗнчен. Ман, хамӑн тӳр ӗҫсӗр пуҫне нагрузкӑ пысӑк. Кӑнтӑрла ман ҫинче ҫырнипе ҫитмест, ҫӗрле пулсан хам ҫине хӑпарсах выртаҫҫӗ вара.

Епӗ вулав ҫуртсенчи сӗтелсен представителӗ. Ман та тӳр ӗҫсӗр пуҫне урӑха тӳсме тивет. Избач йапӑх пиркийех нихҫан питӗм тасалса курмасть. Кӗнеке вулама пыракансен усал сӑмахсене каланипе ӑшӗ канмасть пулас, ҫинчен питӗм ҫине чернилпа ҫырса хӑвараҫҫӗ.

— Сирӗн пурнӑҫ ҫапах тӳсӗмлӗ. Вӑт пирӗн пурнӑҫа курасчӗ есӗр. Мӗн чухлӗ ҫын ҫийес патака ҫийетпӗр-ши епӗр? Председатӗл хуть бригадира тарӑхтӑр, хуть колхознике, пурӗ пӗр пире йанратса илет. Ох-ха-ха! Мӗн чухлӗ чышкӑ ҫимен-ши епӗр?

Апраз!

Вӑрманта.

Художник Ҫверчков ӳкерчӗкӗ.

Кӑнцеӆаринчен пынӑскӗр: — Пӗрре сулса йкӗ йенчен те йӗр ту-ха. Стахановцӑ шутне кӗртӗпӗр.

Йӑвӑҫ касакан: — Пӑрӑн, пӑрӑн! Ан кансӗрле!

АРМУТИПЕ ЛАНТĂШ ТАТА ЙУМАН.

(ЙУПТАРУ).

Пĕр хăртнăра, вăрманта,
(Еп хам унта пулман та)
Саркаланса ларнă пулнă Армути,
Ир-каçсенче вĕриленсе кулнă ун тути.
— Ех,—тенĕ,
Чунтан-вартан хĕпĕртесех:
—Мĕн пек ырă шăршă саратăп вăрмана.
Йулташсен пухăнса хаљ мана,
Урра! çĕклесси çех йулнă малала...

Ну, пурнăç карĕ. Ну-и карĕ...
Армути, вĕт, мĕнтен вăл култарĕ—
(Хăрах куçне хупса йăвашланкаларĕ)
Хам шăршăпа хам савăнап тăраниччен,
Çывăрнă чух та сывлатăп ўпке карăниччен.

Авă, лантăш, шĕшкĕ айĕнче ларать.
Унăн мĕн усси? Мĕн ыррине парать?
А, хăй çавах та, шел, качча тухас пек
Капăрланса ларнă вĕçкĕн мĕкĕлтек.

Намăса пĕлес хуть çĕр çине шăтма,
Тўсейместĕп ун шăршине чăтма.
Уншăнах пуç ыратать, хăсăк килет,—
Армути татах хайарланса илет.

— Ну,ну,ну-у? Ытлашши ан кай иртĕнсе.
Сан сăмахпа сахал мар йĕрĕнсе...
Хăвна шăршлаха, мĕн шăрши кĕрет.
Çитменне, çил хăш йенчен вĕрет?—
Тесе Лантăш, лăпкăн каларĕ,
Кăштах хăйуллăн йусанкаларĕ.

Ăна илтсен çилĕллĕ Армути çилли
Чĕрне вĕçне çитсе те, шăнăçаймарĕ.
—Лантăш тавраш, чĕрри çеç мар, вилли
Ан вырттăр манăн çывăхра!—тесе йунарĕ.

—Чим, тăхта, Армути, пĕлес пулать ĕçе,
Ĕçе пĕлмесĕр ытлашши мĕншĕн кĕвĕçес?
Сана—Армути, теççĕ, тискер шăршă сан.
Лантăш шăршипеле хаваçланса

Хăвăн усал шăршуна та йышăнмастăн,
Хăвăл пуçна пухас пулать ăс-тăн,
Тенĕ, тавлашăва илтсен пĕр йуман.
(Армутине çумне лартса йатларĕ.)

—Тĕрĕс! Тĕрĕс!—Çулçăсем алă çупрĕç.
Камăн ырă шăршине тинех тупрĕç.
Урăх чĕнмерĕ армути, пуçне усрĕ.
Тем шутларĕ, те айăхĕ пусрĕ.

Çынсем хушшинче те час-часах
Çавăн пек пулкаласа иртет.
Харпăрхăй йапăх ĕçне пытарса
Çынăн лайăх ĕçне йышăнса илет.

П. Шулгер.

Хурчкапа кураксем.

Кураксем йăмра тăрне ларнă,
Унта вĕсем чĕпĕсем кăларнă.
Каак!—теççĕ кураксем,—каак!
Çуркуннешĕн çĕкленчĕ шăмшак,
Лайăхланчĕ ытла та тĕнче,
Ех, аван-çке кун пек кунсенче!
Пĕрлешсе пурăнатпăр—аван.
Çакăнта вĕçсе çитрĕ хурчка.
—Кураксем!—тет вăл,—кураксем!
Ушкăна илмĕр-ши, тăвансем?
Сăн-сăпат пĕрешкел вĕт, ара?
Хурчкасем—куракшăн, тăшман мар.
—Ха-ха-ха-ха!
Тупать йепле вăл сăмаха...
(Кулса йачĕç лешсем хурчкаран),—
Йун шăрши ма кĕрет-ха санран?
—Йун шăрши?—тет хурчка,—йун шăрши?
Йăнăшатăр—кĕрет тар шăрши.
Халиччен йун ĕçсе пурăнман,
Ăçтан ун пек шăршă пултăр ман?

* * *

—Кирлĕ мар ес пире, кирлĕ мар;
Пирĕн йун сирĕннипе пĕр пек мар;
Кураксем хурчкапа туслашсассăн—
Ырă кун курасса ан асăн!

Марк Аттай.

Вĕрсе хаçат кăларакансем.

А. Степанăв ўкерчĕкĕ.

Шăхасан р-чи „Вăйлă тырпулшăн" ха-çат 1936 ç. йанварĕн 12-шĕнчи №-че çырать: „Колхозниксем агрокружокре вĕреççĕ" (Ответлă редактăршăн М. Пуљхеровский)



Пуљхеровски: — Ах, лайăхç-ке капла вĕрсе хаçат кăларма.

Васкавсăр пулăшупа васкавлă пулăшу.

Питĕ те ырă кăмăлланса кайаççĕ вара пирĕн хăшпĕр учрежденисенчи пуçлăхсем хăшпĕр чух. Кĕтмен çĕртенех ырă хыпарсем пырса калаççĕ. Хăвăн кăсйусенче виç-тăват коропкă çпичкă шăкăртатса çӳрет пулин те хăйсен çпичкипе пирусосем тивретсе параççĕ. Хăйĕн кĕсйинче икĕ пачкă „Пушки" пирус пулин те санран обйазательнă пырса ыйтаť. Çитменнине тата умăнти хаçатна чĕрсе илет пĕр кĕтессинчен пирус çавăрма. Пухусенче тухса калаçма та хатĕр сан çинчен мухтаса. „Вăт йепле кадăрсем хатĕрлетпĕр епĕр. Тава тивĕçлĕ çын вăл пирĕн. Мĕншĕн çавăнтан вĕренес мар вара пирĕн ĕçлеме?" Ой, кусене анчах калати ара вăл сан çинчен. „Ылтăн"—тесе кăва калаймасť. Кĕтсех тăр вара учрежденинчи пуçлăху сан çинчен çапла калаçма пуçласан: айăнти пуканна туртса илсе ура çине тăратса хăвараççĕ обйазательнă. Пуканĕ вăл тарам, пуканне урăххине те тупса ларма пулĕ ăна учрежденинче. Тăма та вырăн памаççĕ. Тăнă çĕртенех хулран тытаççĕ те: „Ну, простă, тĕлĕнмеле сирĕншĕн. Мĕн чухлĕ пурăнатăп ку тĕнчере—сан пек лайăх ĕçлекен çын курман. Тупăта турăшăн курман. Есĕр кирек ăçта кайсан та выçă вилес çук. Анчах нимĕн тума та çук. Хăварах пĕлетĕр: сире ку ĕçре усрама намăс пире. Простă, намăс. Хăварах шутласа илĕр. Малала хăпартма вырăн çук пирĕн учрежденинче. Простă, хамăн заместитĕл тăваттăмчĕ—ну вĕт хăварах пелеттĕр: ку заместитĕл те сирĕн пекех лайăх ĕçлет. Ну шутласа пăхăр-ха хăварах. Простă, сире хĕрхенсе калатăп.Так што сире... Ăнлантăр-и есĕр епĕ мĕн каласшăннине?.. Так што сире... Хăварах шутласа пăхăр... Питĕ те шел лайăх ĕçлекен йулташа... Ну, нимĕн тума та нимĕн çук... Так што, сире ĕçрен хăтармала пулаť. Ну, компенсаци паратпăр, конечнă",—алăран тытса хăй патне çавăртса кĕрет сире кабинета.

— Итлĕр-ха... Ман положени хаљ...—Тытăнатăн вара йăлăнма, куçусене шывлантарса.

— Тĕрĕс. Тĕрĕс. Сан положенине шута илсе те çапла тăвас терĕмĕр.

— Хăварах пĕлетĕр: ман нумайах та çӳремеле мар,—йăлăнма тытăнаť вара пуринчен ытла çире пур хĕрарăм пулсан.

— Ой, çавсене шута илнĕ те çав. Ыран-пайан çăмăлланас вăхăт çитнĕ. Çемйе хутшăнаť. Шалу чылайтарах кирлĕ пулаť. Ку ĕçре, хăварах пĕлеттĕр, шалу сахалтарах сире. Сире усал тăвасшăн мар, ырă тăвасшăн тăрăшатпăр вĕт. Кадăрсемшĕн. Калама та çук шел. Ну, хăварах пĕлеттĕр... "ĕçрен хăй ирĕкĕпе тухса кайрĕ" тенĕ хут тыттараť вара сана питĕ те хуйхăрса.

— Рехмет сире, ырă çынсене...—шăла çыртнипе ирĕксĕр калатăн тавăрса.

— Кĕрсе тухăр иртнĕ çӳренĕ чух. Пулăшу пама пултаратпăр,—алăкне хăй уçса йăвашшăн кăлараť кабинетран.

И так... Истори пуçланаť çапла: Раисă Александровнă Илларионăвăна 12-мĕш столовăйран йăпатсах кăларса йараççĕ. Урăх тытма усă çук ăна кунта. Мĕншĕн тесен, ыран-пайанах çăмăлланмала Илларионăвă.

— Васкавлă пулăшу. Пĕр хĕрарăм урамрах çăмăлланма аптăраса ӳкнĕ! Часрах васкавлă пулăшу!—поликлиникран ыйтаççĕ телефон тăрăх васкавлă пулăшу. Часрах васкавлă пулăшу!—васкатаççĕ тепĕр хут.

Васкавлă пулăшу сехет çурăран çитет „васкаса".

— Ма васкамастăр?—асăрхаттараççĕ çăмăлланнă хĕрарăмăн йапăх положенине кура.

— Кун пек истори пирĕнпе пĕрре кăна мар!—ответлет васкавлă пулăшун каретти. Астăвăр: каретти ответлет, çыннисем чĕнмеççĕ.

„Принимая во внимание... ваше положение... пайан сире кăларатпăр кунтан"—пырса йевитлеççĕ çестрасем.

— Мĕншĕн вăхăтсăр?—тĕлĕнет ачан амăшĕ.

— Есĕ кăна мар çăмăлланакан хĕрарăм. Мĕн калаçмали пур? Тăр та—тумлан. Вăт сана тумтирӳсем.

Виççĕмĕш кунне кăлараççĕ Раисăна. Раисă тухаť. Хăваланă çĕртех ирĕксĕр вăрçса выртма выљăх мар ĕнтĕ вăл—етем, ывăл ача амăшĕ. Раисă ывăла çĕклет те утаť хуланала. Анчах ăçта кайас? Камран пулăшу ыйтас? Хăйĕн ĕлĕк пĕрле ĕçленĕ йулташĕ патне кĕрет. Кунта унăн пĕртен пĕр хӳтĕ.

— Хаљ хам тăрантарса усратăп. Анчах епĕр хамăр та иккĕн пурăнатпăр. Питĕ те шел. Ачи питĕ те маттур. Малашне мĕнле пурнăçĕ,—хуйхăрса каласа параť Раисă çинчен Верă Бељбасăвă.

Çакăн пек хисеплеççĕ Раисăна васкавсăр пулăшупа васкавлă пулăшу. Чикки пур-ши кун пек пулăшусен?

С. Тољмăс.

Шупашкарсене--капкăнла консуљтаци.

— Кассăра черетсĕр чек илме шутлатăн пулсан, ху арăмна каççире лартма тăрăш. Черетре тăмăн.

— Столовăйне чей ĕçме кайас пулсан килте малтан шуç чейникпе вĕри шыв хатĕрлесе кĕрĕк арки айне тытса кĕр. Чей куркисене ан ман.

— Хĕлле илес кĕççе атта май уйăхĕнче илсе хур. Кайа пулмĕ.

— Ача ваљљи магазинсенче выљамали кĕреçе иличчен, пасарта колхозниксенчен мăн кĕреçе ил. Вăл—икĕ хут йӳнĕрех.

— Магазинра картунтан тунă ĕне иличчен пасарта чĕрĕ ĕне ил. Вăл вунă хут çеç хаклăрах. Сĕт параť.

— Аш магазинĕнчен çтерљаť илес тетĕн пулсан—пулăçă пул та Атăла сĕрекепе кайса пулă тытса килсе аш магазинне сут. Унтан—ил.

— „Ура шусан кам ӳкмест. Ӳкнĕ çĕрте кам выртаť"—теççĕ. Карл Маркс урамĕнчи тротуарсем тăрăх утнă чух ӳксен ан выртăр. Тăрăр та малала утăр. Урусем хуçăлсан та—„вăрçăра аманнă"—тейĕр. Атту, йут хуласенчен килнĕ йулташсем: „килес çул, мрамăрлă тротуарсем тусан, мĕнле çӳрĕç-ши? Халех, пăрлă тротуарсем çинчех, ӳксе урисене хуçма пултараççĕ те"—тесе, кулма пултарĕç.

Пĕлтерӳсем.

Кама мĕн кирлĕ: 200 пат шăннă улма, 40 пат пăрçаран тунă салат, çур гектар кишĕр выранĕ çинченех сутатпăр. Зайавкă çак адрĕспе парăр: Вăрнар р., Малтикасри „Пĕрлешӳ“ колхоз.

Заказ илетпĕр: Хурал пӳрчĕ тума. Тăррине сывлăшпа витетпĕр. Кантăкĕсене пăртан лартатпăр. Алăкне хупран каратпăр. Урайсене тăмпа сăрлатпăр. Кăмакасăр вутă хутмала (епĕр хамăр улăм хутатпăр) тăватпăр. Маччисене, çтенисене хăрăм текен сăмалапа сăрлатпăр. Питĕ те лайăх пулать. Ку тĕлĕшпе пирĕн темиçе çулхи опыт. Хуралçисем пурăнасси çинчен шанчăк памастпăр (хамăрăн пуранмаççĕ). Адрес: Йетĕрне р., Йекĕмушкĕн йалсовечĕ.

Лашасен калуш хапрăкĕ лартрăмăр. Питĕ те аван. Хамăр сăнавпах сăнаса пăхрăмăр. Калушсене тăхăнтарма çынсем кирлĕ мар. Витене кĕрсе тăрсан хăйсемех тăхăнаççĕ. Пĕç кăкĕ таранах пулаççĕ кунчисем. Çуркунне ваҫҫи кунчисене хырăм айне çитиччен тума план йышăннă. Килсе курма ыйтатпăр. Адрес: Трак р., „Канаш“ колхоз.

Платниксем шыратпăр: Йалсовечĕ ваҫҫи кăнцеҫари тума нимĕн йăвăççăр, нимĕн хатĕрсĕр ĕçлесе, сывлăшран хăпартса лартакан, сывлăшпа тăранса пурăнма пултаракан платниксем шыратпăр. Хамăр колхозри платниксем кахал—йапала хатĕрĕсемсĕр ĕçлемеççĕ, тĕпсĕрсем—çимесĕр тăранмаççĕ. Пултаратăр пулсан—килĕр! Адрес: Хĕрлĕ Чутай р., Тури Çĕрпӳкасси.

Хĕр шыратăп: Вăтам кĕлеткелĕ. Пуçра, пĕр винтăсăр пуçне, пур винти те пур. Питĕ те ĕçлĕхлĕ—иртнĕ çулта колхозра ĕçлесе икĕ кун çурă „труден.ь“ илнĕ. Пурнăç тĕлĕшĕнчен, çав колхозра ĕçлен ĕ пек хастарлă ĕçленине пула, çăлтăрсемпе витнĕ крышăлă, уйăхпа карнă занавескăлă кантăксем Хĕвел пăхнă кун йаланах хĕвел çутатса савăнтарать. Çуллахи çăмăр кунсенче—пĕлĕтрен душ пĕрĕхсе тăрать. Хĕр шыраканĕ: Калчакассинчи Кахал Кавĕрле.

«Тĕн склачĕ». Хĕрлипе те, шуррипе те, симĕссипе те, саррипе те, хурипе те сут тăвать. Пичкерен те сутатпăр.

Адрес: Алатырь, Московская, № 20. Хусанти Главспиртăн «Тĕн склачĕ».

Ĕç шыратпăр. Карл Маркс урамĕнчи йăвăççене шуратма чарчĕç çак кунсенче. Ĕçсĕрех тăрса йултăмăр. Вăхăтлăха та пулин ĕç шыратпăр. Шупашкар хулинчи качакасем.

Вырăн шыратăп: Суту-илӳ тума пĕлекен çын. Практикă пысăк: хам фермăри сыснасене хуҫăмсем пăтне ăсатса, вĕсен укçипе паҫто илнĕ практикă çине кăтартма пултаратăп ку тĕлĕшпе. Адрес: Шăхасан р., Троицкăри „Çвет“ колхозăн сысна фермин аслă директăрĕ Федорăв.

Çĕнĕ изобретатĕлствă: Йулашки техникăн йулашки ăсталăхĕсемпе услам çăвĕсем тума тытăнтăмăр. Питĕ те лайăх пулать. Состав çурри—пылчăклă хăйма, ыттисем—тĕрлĕрен çӳп-çаппа сăвакан ĕнесен çăмĕсем. Адрес: Трак р., Аслă Чуллăри „Прогресс“ колхозĕн сĕт-çу ферми

Ăстаçă шыратпăр: Трахбрат Иванов çухалчĕ. Трахпункт çăрапа питĕрĕнсе тăрать. Уçакан ăстаçă шыратпăр. Адрес: Шăхасан р., Кайри Тукай, трахпункт.

Хеопăс пашни: Сыснасем ваҫҫи Хеопăс пашни тăватпăр. Икĕ çул хушшинче икĕ йĕрке купаларăмăр. Сыснасем сăнне пăхсах темле сивве те чăтма пултараççĕ. Заказсем илетпĕр, тума кĕрĕшетпĕр. Адрес: Шăхасан р., Шупуç Чуракасинчи колхоз „Шмидт“.

Йӳнĕ крышă: Чăх-чĕпсен фермă витине пĕр пуссăр витсе пама пултаратпăр. Ни хăма, ни улăм, ни пăта кирлĕ мар. Çуркуннехи ăшă хĕвел хĕртме тытăниччен нимĕн сийенсĕр ларма пултарать. Çуркунне крышă хăйех иленет. Анчах чăххисем мĕнле тухасси пирки шанчăкне хамăр çине илместпĕр. Адрес: Вăрмар р., Пысăк Йенкассинчи Трактăр“ колхоз.

Вăта-кас Кипечри (Шăхасан районĕ) пуштă агенчĕ Г. Павлăв çырăва 2—3 уйăх хушши тытса усрать. Хăш-пĕр чух çырусене çынсене вулаттарать, йе çухатать.



1-мĕш çыру: Ех, пурнăç! Çакăнта выртсах ĕнтĕ уйăх иртертĕм. Çапах хуçа пат не леçмеççĕ

2-мĕш çыру: Есĕ сахал пурантăн-ха, епĕ 3 уйăх çакăнтах иртеретĕп. Кунта пурнăç питĕ хăрушă, нумай пурăнаканнисене вĕлереççĕ, çунтараççĕ, йе касса ваклаççĕ

Телейсĕр ӳыха.

Кĕперсене йусаман пирки Кăшкаркассинче (Çĕрпӳ р.) пĕр ӳыха шăтăка анса кайса вилнĕ.

Пулас инкеке пĕлнĕ пулсан ку ӳыха çак кĕпер урлă та каçман пулĕччĕ, пĕлменни пĕтерчĕçке. Инкек куçа курăнса килмест çав. Кĕпер шăтăкĕ те тата çав ӳыха каçнă вырăнтах пулнă. Вăл ӳыха каçса кайнине курсанах, унăнне кайри урисене хыпса илнĕ те, шăтăрт! тутарса йулнă. Ӳыха малти урисемпе утма тăнă, утайман. Мĕншĕн тесен, кайри урисем унăн хăй çумĕнче пулман. Вара вăл çынсем пырса пулăшасса кĕтнĕ. Анчах лешсем, пулăшас вырăнне, çава çĕçĕсем илсе тухнă та ӳыхана ваклама шут тытнă.

Ӳыха вĕсенчен пĕрик сăмах каласа хăварма вăхăт ыйтнă.

—Ех,—тенĕ вăл,—вăхăтсăр вилетĕп. Колхозра ĕçлесе, колхоза пулăшас тенĕччĕ. Çук, пулмарĕ. Манăн вăхăтсăр вилĕмшĕн пĕтĕмпех йалсоветĕ айăплă,—тенĕ çĕре ӳнăн сывлăшĕ пĕтсе ларнă.

Ей, мĕн клаçмали пур çав выҙăхпа. Мĕн выҙăх сăмахне итлес, унăн „турă çырни" çакăн пек вилĕмпе вилемле пулнă пуҙ тенĕ те ӳыха пусакансем, телейсĕр ӳыхана майлаштарса та хунă.

Степан Матеш

◆◆ ●● ◆◆

Столовăйĕнче.

Йаланах çакан пек пулса иртет пирĕн столовăйĕнче:

— Васкарах парăр-ха апатне!

— Леш тĕнчене васкатним?

— Çук, заҥатине васкатăп.

— Заҥатине кайакан столовăйĕнче апат çисе çӳремест.

— Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесен, хăвах пĕлетĕн, заҥатине кайа йулма пултаратăн. Епĕр вĕт, учрежденинче ĕçле кенсем мар, сирĕншĕн васкасах каймастпăр. Хăварах пĕлетĕр...

Шчелыванăв.

Кикирек-ку-у-у!!!

Кикирек-ку-у-у!
„Капкăн" илети сан кукку?
Такçанах илет пирĕн Йакку.
Есĕ те илме хапăл ту
Кикирек-ку-у-у!

Хитре инке Урине
Йерçмест сырма урине:
Çĕнĕ „Капкăн" вăл вулаӳ,
Каçса-кайса хăй кулаӳ,
Кикирек-ку--у-у!

Кăтик-кăтик, кăткăтик,
Кулсах вилет пирĕн Кăтик
Ни сывлăшне çавраймасӳ,
Пĕр сăмах та калаймасӳ.
Кикирек-ку-у-у!

Тăпăр-тăпăр ташлари,
Ташлари те йурлари!
„Капкăн" илсе вулари,
Вуланă хыççăн йурлари?!
Кикирек-ку-у-у!

Сармантейăн сар чăххи
Сар çăмарта тунă, тет;
Сарă инке Укахви
Çĕнĕ „Капкăн" илнĕ тет,
Кикирек-ку-у-у!

Кăтра пуçлă автанĕ
Кашта çинче йурă йурлаӳ;
Кĕсел Сантăр Иванĕ
„Капкăн" илнĕшĕн савăнаӳ.
Кикирек-ку-у-у!

„Капкăн"—„Капкăн" кап хыпаӳ
Пĕр çыртсассăн хыт çыртаӳ,
Çавăнпа „Капкăн" аллине
Лекесшĕн мар Аврине.
Кикирек-ку у-у!

Ех, ну Йакку,
Çакă мĕн акку:
Хаҙ çеç килнĕ çĕн «Капкăн»!
Есĕ те илме ак васкăн.
Кикирек-ку-у-у!

ВУЛАКАНСЕНЕ АСĂРХАТТАРНИ: „Капкăнăн" йулашки хуплашки çинче, иккĕмĕш ӳкерчĕк айĕнче „Сылкăран" шанчăклă чинавк пулса килнĕ" тесе çапăннă. Ăна тӳрлетсе: „Сылкăран" шанчăклă чинавник пулса килнĕ"—тесе вуламала.

За секретаря и вып. редактора *Ç. ШĂПЧĂК.* За ответ. редактора *Ф. АЛЕКСАНДРОВ*

Сдано в производство 21/I—36 г. Подписано к печати 5/II—36 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 50. Заказ № 0149

Формат бумаги 1/8 Об'ем 1,25 п. л. Гор. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 5650 Изд-газ «Канаш»

Маскăсăр Тӳмерăв.

1. Переписчик.

2. „Сылкăран“ шанчăклă чинавк пулса килнӗ.

3. Шупашкар советне аркатат̆.



4. „Револђуционера“ тухат̆.



5. Чыслаççӗ.



6. Тасатаççӗ.